Ц. Б. им. Горького

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ÇЕНТАБĔР 2 ЕРНЕКУН 202(5015) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Шупашкар, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—97, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—85, йалхуçалăх пайĕн—4—97, советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăç пайĕн—7—97, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Комсомол уйавĕ умĕн

Октябĕрĕн 29-мĕшĕнче Ленинла-Сталинла комсомол хăйĕн çирĕм-çуллăхне уйавлать. Ку — пирĕн телейлĕ совет çамрăкĕсен, çавăн пекех аслă совет халăхĕн чаплă тата савăнăçлă уйавĕ. Сталинла çамрăксен ÿсĕмĕсемпе тата çĕнтерĕвĕсемпе пĕтĕм совет халăхĕ савăнать.

Ленин—Сталин партийĕ комсомола пăхса ÿстерне, кĕрешÿсенче писĕхтернĕ. Коммуниссен партийĕпе унăн çулпуçĕсем — Ленинпа Сталин комсомола, пĕтĕм совет çамрăкне телейпе савăнăç пачĕç, пуйанлăхпа ирĕклĕх пиллерĕç, вăйпа хăватлăх кÿчĕç, вĕсем çамрăксене кĕрешÿре çирĕп тата шиксĕр пулма вĕрентеççĕ. Коммуниссен партийĕпе унăн çулпуçĕсем—Ленинпа Сталин тĕнчен улттăмĕш пайĕнче ĕççыннисене капиталисăм пусмăрĕнчен ирĕке кăларчĕç, хăйсен çамрăк ăрувĕ валĵи телейлĕ те савăнăçлă пурнăç, ĕçлеме, вĕренме, канма, пĕтĕм пултарулăхпа хастарлăха анлăн сарма кирлĕ майсене пурне те туса пачĕç.

Вĕсем, совет çамрăкĕсем, колхоз хирĕсенче хурçă трактăрсене тата комбайнсене тытса пыраççĕ, самолĵотпа хăвăрт, çÿлĕ тата инçете вĕçеççĕ, танксене çĕнтерÿлĕн илсе пыраççĕ, наукăпа искусствăна алла çавăрса илеççĕ, çĕр айĕнчи пуйанлăха шыраса тупаççĕ. Вĕсем вĕренÿпе ĕçре болĵшевикла воспитани шкулĕ витĕр тухса пиçĕхеççĕ. Вĕсем ССР Сойузне Йапонипе вăрçа хутшăнтарма шутланă тискер фашиссене паттăрăн, шиксĕр, хăйсен пурнăçне хĕрхенмесĕр, етемлĕх курман хăватлăхпа çапса салатрĕç. Çакăнта ĕнтĕ Сталин пăхса ÿстерне çамрăксен сан-сăпачĕ! Етемлĕхĕн нихăш ăрувĕнче те пулман телейпе ирĕк, пуйан та кулĵтурăлă, савăнăçлă та илемлĕ пурнăç—пирĕн çамрăксен пайăнлăхĕ. Вĕсен малашлăхĕ те шанчăклă алăра—вăл Сталинла Конституцире, Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынинче, рабочисемпе хресченсен влаçĕ аллинче.

Социалисăмлă çĕршыв-анçе хăйĕн çамрăк ывăл-хĕрĕсене куç шăрçине упранă пек пăхса ÿстерет, уншăн тăрăшать. Сталинла икĕ пилĕкçуллăх хушшинче государстві халăха çутта кăларас ĕçе 50 мĕлйард тенкĕ укçа панă. Аслă шкулсенче совет çамрăкĕсем 550 пин çын вĕренеççĕ, 10 мĕлйун çын ытла государства туса панă стадионсемпе площадкăсенче физкулĵтурăпа спорт урлă хăйсен сывлăхне çирĕплетеççĕ. Ăста тата мĕнле çĕршывра çамрăксемшĕн çакăн пек тăрăшнипе мухтанма пултараççĕ? Çук, капиталисăмлă çĕршывсенчи çамрăксен пĕр ирĕк—правасăрлăх, чуралăх, ĕççĕрлĕх, выçлăхпа вилĕм ирĕкĕ.

ПСÇЛКС çирĕм çул тултарнă йатпа пуçарнă социалисăмлă ăмăрту вăйланса тата сарăлса пырать. Комсомолĕцсем, вĕсемпе пĕрле кашни совет çамрăкĕ, хăйсен вĕçĕмсĕр йуратакан амăшне-çĕршывва пысăк парнесем панипе уйава кĕтсе илесшĕн ăмăртаççĕ. ЧАССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ комсомолка Фирсăвă йулташ хăйĕн ĕç планне 200—250 процент, станочница-комсомолка Петухова йулташ 200—240 процент тултараççĕ. Патăрйел МТС-чи трактăрис Быкăв йулташ 724 килограм горÿчи перекетленĕ, „Ленинский завет“ колхозри (Йетĕрне р.) комсомолка Овчинникăвă йулташ кунсерен 700 кĕлте выçса çыхнă. Улатăрти пăравуссем йусакан савăтри комсомолĕцсем уйав валĵи планран ытла пĕр пăравус хатĕрлеççĕ.

Çĕршывăн çамрăк патриочĕсем хăйсен производствăлă обйазательствăсене пурнăçланипе пĕрлех, хĕл пеме, вĕçме, сывлăшпа санитари оборонине вĕренме, вăрçă специалĵнăçне илме тăрăшаççĕ. „Малалла“ колхозри комсомолĕцсем (Тутаркас р.) 47 çамрăка хăйсем лагĕр туса çар ĕçне вĕрентнĕ. Кашни комсомолĕц ик-виç оборонă значокĕ илнĕ, халĕ пулеметчиксем, кавалериссем пулма вĕренеççĕ.

Совет çамрăкĕсен политикăлă тата производствăлă активлăхĕпе пултарулăхĕ вăйлăн çĕкленчĕ. Ку ĕнтĕ сталинла çамрăк ăру пĕрлĕхлĕ пулса, Ленин—Сталин партийĕ тавра çирĕп пĕтĕçсе тăнине, социалисăмшăн паттăрăн кĕрешме хатĕр тăнине кăтартать. Комсомол организацисен çак ÿсĕ пыракан çĕкленĕве организацилемеле, йертсе тата пуçарса пымала. Илнĕ обйазательствăсене пурнăçлама кашни комсомолĕцпа çамрăка пулăшмала, çамрăксем хушшинче социалисăмлă ăмăртупа стахановла йухăма тата вăйларах сармала.

Комсомолăн хăшпĕр пуçламĕш организацийĕсенчи комсомолĕцсем: „Политшкула лайăх çÿретĕп“, „член укçи вăхăтра тÿлетĕп“, „хаçат тăтăшах вулатăп“ т. ыт. çавнашкал обйазательствăсем илнĕ. Сăмахран, çакнашкал обйазательствăсене „Красный молот“ ертелĕнчи, Стройтрестпа Спиртсавăтри пуçламĕш организацисенче илнĕ. Кунашкал обйазательствăсем вĕсем кашни комсомолĕцăн устав тăрăх тумали ĕçĕсем. Ку ĕнтĕ уйав йачĕпе илекен обйазательствăсем çине йатне туса, çиеелтен пăхнине кăтартать. Комсомол организацисен çакнашкал практикăна сивлемеле, çамрăксен политикăлă тата производствăлă активлăхне тивĕçлипе йертсе пымала.

Комсомолăн промышлĕннăçра, йалхуçалăхĕнче, кулĵтурă строительствинче, пĕр сăмахпа каласан, социалисăм строительствин пур участкисенче те чаплă уйав йачĕпе тăван çĕршыв-аннене çĕнĕ çĕнтерÿсемпе, çитĕнÿсемпе парнелемеле.

Халĕ пирĕн Чăваш парторганизаци Шупашкарпа Канаш хушшинчи чукунçула туса пĕтерессипе çĕнĕ савăтсен строительствине хăвăртлатас тĕлĕшпе хĕрÿлĕ ĕçлет. Çакăнта ĕнтĕ чăваш комсомолĕ хăйĕн пултарулăхĕпе хастарлăхне кăтартма тивĕç.

ПСÇЛКС Тĕпкомĕн V-мĕш пленумĕ малта пыракан çамрăксене комсомола илес ĕçри пысăк çитменлĕхсене палăртса, вĕсене пĕтермелли майсене кăтартса пачĕ. Çакăн хыççăн комсомол ÿсĕмĕ вăйланчĕ. Иртнĕ 9—10 уйăх хушшинче пирĕн республикăра 11 пин ытла çамрăксем комсомола кĕнĕ, 340 колхозра çĕнĕрен ПСÇЛКС пуçламĕш организаци тунă. ПСÇЛКС хула комитечĕпе райкомсем 1300 комсомолĕца партине кĕме рекомендаци панă.

Комсомола пĕлÿлĕх тĕлĕшĕнчен çÿлте тăракан çамрăксем кĕреççĕ. Вĕсене болĵшевисăма вĕрентес пулать, вăл çăмăл ĕç мар. Комсомолăн воспитани ĕçне халиччен-хинчен темиçе хут тарăнлатса лайăхлатмалла, идейăлăха хăпартмала.

Халĕ, уйава хатĕрленнĕ тапхăрта, комсомол хăйĕн ретне çирĕплетес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса иртерет. Çитес кунсенче отчотпа суйлав пухăвĕсем пуçланаççĕ. Пуçламĕш организацисен пухăвĕсем комсомолĕцсен сыхăлăхне ÿстерме çамрăксем хушшинчи воспитани ĕçне вăйлатма, организацисене çирĕплетме пулăшмала. Халăх тăшманĕсемпе кĕрешсе пиçĕхнĕ, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн чĕререн тăракан, ĕçре хăйĕн пултарулăхне кăтартнă, пĕлÿ тĕлĕшĕнчен малта пыракан комсомолĕцсене йертсе пыракан вырăнсене лартса пымала.

Парти организацисен комсомола йертсе пырассине темиçе хут вăйлатмала. Хăшпĕр пуçламĕш парти организацисем час-часах çамрăксем хушшинче ĕçлессине пĕтĕмĕшпех комсомол комитетне йе комсорга шанса параççĕ. Ку йăнăша *халех тÿрлетмеле. Комсомолĕцсене çамрăксене воспитани парасси—парти организацисен кулленхи ĕçĕ.* Парти организацисен задачи—комсомола хăйĕн уйавне çĕнĕ çĕнтерÿсемпе тата çитĕнÿсемпе кĕтсе илме пулăшасси пулать.

Германири компарти çырăвĕ

Франци компартин „Юманите“ йатлă хаçатĕнче Германири компарти Тĕпкомĕн çырăвĕ пичетленсе тухнă, ăна пĕрлĕхлĕ пулса ĕçлесси çинчен Германири социал-демократсем патне çырнă.

Çыру Германин шалти лару-тăрăвĕ пит йăвăрланса çитни çинчен, предприйатисене вăрçă тĕллевĕсемшĕн ĕçлеме йĕркелесе майлаштарни çинчен, Германи çарне мобилизацилени çинчен, çавăн пекех тата Гитлĕр диктатури Чехословакине вăрçăпа хăратни çинчен палла тăвать.

Лару-тăру пит çивчĕленсе çитнине шута илсе, Германи компартийĕ Германири социал-демократла партин пур организацийĕсене те сăмахсем çинчен ĕç çине, куçма тата вăрçăпа фашисăма хирĕç пыракан кĕрешÿре пĕрлĕхлĕ пулса ĕçлемешкĕн коммунисла партипе тачă çыхăнма чĕнет. (ТАСС).

„Отлично“ паллăпа вĕренĕр

И. Д. Папанин Ростоври шкул ачисем патне йанă çыру

Совет Сойузĕн Геройĕ Папанин йулташ августăн 30-мĕшĕнче Ростов облаçĕнчи шкул ачисем патне çыру йанă. Унта çапла çырнă:

„Çу вăхăтĕнче канса тĕрекленнĕскерсем, есĕр çентябĕрĕн 1-мĕшĕнче вĕренме тытăнаттăр. Вĕренÿшĕн çирĕп кĕрешĕр, „отлично“ паллăпа вĕренĕр. Пĕр-пĕринпе ăмăртса, есĕр лайăх вĕренме тата кайа йулакансене лайăхрах пулăшма пултараттăр.

Вĕренĕр, манăн хаклă ачасем! Усĕр те коммунисăм ĕçĕшĕн, пирĕн паттăр халăхшăн, пирĕн тăван çĕршывшăн, аслă та телейлĕ Советсен çĕршывĕшĕн кĕрешекенсен ретне тăрăр!“. (ТАСС).

Коммунис Сушкин йулташ танкĕ

Пĕрремĕш Приморски çарĕн Н часĕнчи танкиссен лагĕрĕ. Вăрман хĕрринчи йăвăç тĕмисем хушшинче ăста маскăланнă калама çук пысăк танксем.

Лагĕр кунĕ пуçланать. Çĕр çинче çÿрекен дредноутсем чĕрĕлеççĕ. „Тăшмана“ çĕнтерсе тăкма вĕсем хăвăрт малалла чупаççĕ. Мухтавлă танкиссем орудисемпе пулеметсенчен питĕ те тĕл переççĕ. Пĕрре пенĕ хыççăн тепри тивет.

Мала тухассишĕн пыракан ăмăртăва чаçри мĕн пур танк екипажĕсем хутшăннă. Лагĕр вăхăчĕ хушшинче вĕсем хăйсен çапăçу ĕçне тата политикăлă пĕлĕвĕсене чылайах ÿстерне. Анчах та коммунис Сушкин йулташ танкĕ йаланхи пекех пуринчен те малта пырать. Августăн 30-мĕшĕнче пенĕ чухне унăн екипажĕ тепĕр çĕнĕ çĕнтерÿ тунă—пĕр мишен йулмиччен пурне те тивретнĕ.

— Пирĕн екипаж,—тет Сушкин йулташ,—Пĕрремĕш Приморски çарĕнчи мĕн пур танк екипажĕсем хушшинче пĕрремĕш вырăн йышăнма задачă лартрĕ. (ТАСС).

„Иосиф Сталин“ пăрçĕмрен рейсĕ

Полĵар унки хыçала йулнă

Августăн 31-мĕшĕнче „Иосиф Сталин“ пăрçĕмрен Полĵар ункинчен иртсе кайнă. Тĕтрепе хупăрланнă карап Скандинави çыранĕсенчен 70 милĵ çурçĕр-хĕвелтухăçнелле малалла кайать.

Стахановла йухăм пуçланни виçĕ çул тултарнине пăрçĕмрен çинчи çынсем савăнăçлăн кĕтсе илнĕ. (ТАСС).

Франципе правительствă декретне хирĕç протестлеççĕ

Франци правительствин 40 сехетлĕ ĕç ернине улăштаракан декречĕ Францири ĕççыннисене хытăн хумхантарса йанă. Рабочисен пичечĕ Париж районĕнчи профсойузсен Пĕрлешĕвĕн воззванине пичетлесе кăларнă, унта çапла каланă: правительствă йышăннă решенисем 40 сехетлĕ ĕç ерни çинчен калакан саккуна пăсаççĕ. *Профсойузсен Пĕрлешĕвĕ хăйĕн членĕсене сыхăлăхлă тата дисциплинăлă пулма чĕнет.*

Парижри пилĕк районри коммунисла организацисен çекретарисем çав районсенчи социалисла федераци çекретарĕсем патне çыру йанă, çав çырура пулса тăнă лару-тăру çинчен сÿтсе-йавма килĕшÿ комитетне пухма чĕннĕ.

Августăн 30-мĕшĕнче Рено савăчĕсенчи профделегатсен икĕ пин çынлă пухăвĕ пулса иртнĕ, пуху правительствă декретне хирĕç протестленĕ. Рабочи-строительсен федерацийĕ те çавăн пекех протестленĕ.

Пĕтĕм Франци тăрăх нумай пин çынлă митингсем пулса иртеççĕ, вĕсенче чурмче те правительствă декретне хирĕç протестлени çинчен пĕлтереççĕ. (ТАСС).

Совет павилĵонĕн пĕтĕм тĕнчери йармăркăри—Измирти выставкăри çитĕнĕвĕ

Пĕтĕм тĕнчери йармăркăра—Измирти (Турци) выставкăра совет павилĵонне пит нумай çынсем пырса кураççĕ. Йулашки кунсенче павилĵона Турци хресченĕсем пысăк ушкăнпа пырса курнă, вĕсене йалхуçалăх машинĕсем интереслентернĕ. Турци фирмисем совет йалхуçалăх машинĕсене илме чылай заказсем панă.

Çавăн пекех совет павилĵонне Турцири хăшпĕр çар чаçĕсем те пырса курнă, вĕсемпе пĕрле офицерсем те пынă. Вĕсем пуринчен ытла Хĕрлĕ Çар пайĕпе интересленнĕ. Совет кинофилĵмисем пысăк çитĕнÿпе иртеççĕ, кунсеренех темиçе пин çын кĕрсе курать. (ТАСС).

Газогенератăрлă авточупу вĕçленнĕ

Августăн 30-мĕшĕнче Мускавра газогенератăрлă авточупура пулнисене кĕтсе илнĕ, вĕсем 11.000 километр тăршшĕ çула чупса тухнă.

Чупу командорĕ Никанорăв йулташ Машиностройени Халăх Комиссарне Лĵвов йулташа тата оргкомитет председательне Лазарĕв йулташа рапăртлать.

— Партипе правительствă заданине коллектив тÿррĕн пурнăçа кĕртрĕ. Машинăсем, çул çинче тĕл пулакан мĕн пур йăварлăхсене çĕнтерсе, 10.890 километр тăршшĕне чупса тухрĕç, халĕ вĕсем йăлтах йусавлă. Çыннисем сывă, хăйсене лайăх туйаççĕ.

Финиш пулнă вырăнтан пуçласа автомашинăсем пĕрин хыççăн тепри Мускав патнеле пынă, вĕсен пуçĕнче газогенератăрлă колоннă пынă. Крымски площчĕдĕнче чупура пулнисене кĕтсе илнĕ йатпа митинг пулса иртнĕ. Митингра Мускав çыннисем пинщерĕн пулнă. (ТАСС).

Советăн иккĕмĕш велотурĕ пулса иртнĕ

Августăн 6-мĕшĕнче 117 велосипедис—советăн иккĕмĕш велотурĕнче пулнăскерсем — Мускавран инçетри çула (3.200 километр тăршшĕ), виçĕ сойузлă республикăсен столицисем — Мускав, Кийĕв, Минск хулисем урлă кайакан çула тухса кайнă. 23 кун хушшинче вĕсене çул çинче нумай йăварлăхсене çĕнтерме тивнĕ.

Чупу финишĕ августăн 29-мĕшĕнче Мускавра пулнă.

ПСÇЛКС 20 çул тултарнă йатпа тунă пĕрремĕш приза динамăвĕц Денисăв илнĕ. Велотурта иккĕмĕш çĕнтерекенĕ—спартакăвĕц Букрейĕв тата виççĕмĕшĕ — динамăвĕц Тарачков. Командăсем хушшинчи пĕрремĕш вырăна „Спартак“ гонщикĕсем йышăннă.

Советăн иккĕмĕш велотурне Николай Денисăв 108 сехет те 24 минут та 58 çекундă хушшинче вĕçленĕ. Букрейĕв — 108 сехет те 55 минут та 33 çекундă хушшинче, Тарачков—109 сехет те 00 минут та 55 çекундă хушшинче.

Советăн иккĕмĕш велотурĕнче пулнисем иртнĕ çулхинчен самай лайăх резулĵтатсем кăтартнă. (ТАСС).

Совет Сойузĕ тăрăх

●● Казахстан халăх поечĕ Джамбул „Актюз“ рудникри шахтерсем патĕнче пулнă. Йуратнă поета кĕтсе илме рабочисен клубне 500 шахтĕр пухăннă. Джамбул вĕсене аслă Сталина халалласа çырнă хăйĕн сăввисене йурласа панă.

●● Йакути хулисемпе йалĕсенче кивĕ те тĕксĕм йуртăсем вырăнне çутă та аслă çуртсем тăваççĕ. Çак çул хушшинче çеç республикăри район центрĕсенче 200 ытла çĕнĕ çуртсем туса лартнă. Колхозниксем те лайăх çуртсем нумай тăваççĕ.

●● Батайск авиашкулĕнчи Сойузри хĕрарăмсен пĕрремĕш ескадрилйи вĕренĕве лайăх пĕтерне. Мĕн пур хĕр-лĵотчицăсем, государствă комиççийĕнчен пысăк хак илсе, екзаменсем панă. (ТАСС).

Перекет кассине укçа хывасси ÿсет

Ишекри перекет касси Йшлей районĕнчи лайăх ĕçлекен перекет кассисенчен пĕри шутланать. *Колхозниксемпе колхозницăсем, служащисем перекет кассинче йалан тытакан укçа хисепĕ 34.000 тенкĕ* çĕрен иртет. 1937 çулта 16.000 тенкĕ пулнăччĕ. Çак хисепрен колхозниксемпе колхозницăсем 48 процент укçа тытаççĕ.

Ишекри перекет касси займсем йĕнĕпе те пысăк ĕç тăвать. Займ вылĵăвĕсем тăрăх 2.325 тенкĕ вылĵăв укçи тÿленĕ. Çак *шутран* Димитрийĕва Христина 300 тенкĕ, Павлăв Петр 150 тенкĕ тата ытти çынсем те пысăк вылĵавсем илнĕ.

Арк. Наумăв.

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Икĕ фронт

„Франко генерал тылĕнче çарăн хумханăвĕсемпе восстанисем пулаççĕ“. (Хаçатсенчен).

— Мĕншĕн Есĕр кайала-малалла переттĕр? Ăста-ха хирĕçекенсем?
— Пирĕн хирĕçекенсем икĕ çĕрлĕ: малта республиканецсем, а тылра—хамăр çар.

Г. Валĵк ÿкерчĕкĕ („Прессклише“).

Франци правительстви 40 сехетлĕ ĕç ерни çинчен йышăннă решени

Августăн 30-мĕшĕнче Франци правительстви 40 сехетлĕ ĕç ерни çинчен решени йышăннă. Çак решени, правительствă официаллă пĕлтернĕ тăрăх, çакăн патне илсе пырать:

Правительствăна нацилă оборонăпа государствă нушисем валĵи ĕçлекен пур предприйатисенче те ĕç сехетне çĕнĕрен хушса пама ирĕк паракан саккун кăлараççĕ.

Çавăн пекех тата саккун уйрăм çынсен аллинче тăракан предприйатисене, ĕç министрĕ ирĕк панă тăрăх, хăйсем патĕнче ĕç сехетне хушса пама ирĕк парать.

Рабочисем хушшинче çак саккуна кăларнă пирки питех те тарăхаççĕ, мĕншĕн тесен вăл 1936 çулта парламент суйлавĕсенче халăх фрончĕ çĕнтернĕ хыççăн йышăннă социаллă саккунсене хĕсни пулать. (ТАСС).

Комиççи ĕçе тытăнчĕ

ÇĔРПÿ. (Телефон тăрăх). Çентябĕрĕн 1-мĕшĕнче призыв комиççийĕ ĕçе тытăнчĕ. Мăн Тукалĵпе Патăрйел йалсовечĕсенчи призывниксем призыв пунктне организациллĕн килчĕç. Призыв пуçланнă кун йалхуçалăхĕнчи специалиссем призыва кĕрсе тухрĕç.

Призывниксем кунта вăхăта савăнăçлăн ирттереççĕ. Комиççи çуртĕнче Осоавиахим, РОКК, СВБ тата ытти организацисем те кĕтессем организациленĕ. Тĕрлĕ справкăсем параççĕ. Призывниксем физкулĵтурă площадкинче волейболла вылĵаççĕ. Хĕрлĕ кĕтесре хаçат-журнал вулаççĕ, шашкăла тата шахмăтла вылĵаççĕ.

Çĕçси ĕçĕсем çинчен доклад

ПСК(б)П Обкомĕн партпрос çурчĕпе парти Шупашкар хула комитечĕ августăн 31-мĕшĕнче, Строительсен клубĕнче, Шупашкарти тата хула çывăхĕнчи йалсенчи пропагандиссемпе агитатăрсен пухуне ирттерчĕç. ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çеççийĕн ĕçĕсем çинчен ССР Сойузĕн Верховнăй Совет депутачĕ Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиум председателĕ З. А. Андрейĕвă йулташ доклад туса пачĕ.

Телейлĕ пурнăç саккунĕсем

ШĂХАСАН. Пур йалсоветсемпе колхозсенче те ССР Сойуз Верховнăй Совечĕн 2-мĕш Çеçси решенисене тулли кăмăлпа сÿтсе-йаваççĕ. Чулкăмака йалсоветĕнче йалсоветпа колхоз активĕн канашлăвĕнче, хĕрарăмсен пухăвĕсенче сÿтсе-йавнă. Шĕнер, Çĕнĕ Мами, Уйкас Кипек, Вăрманйел, Шуркасси йалсовечĕсенче Çеçси решенийĕсене пухусенче сÿтсе-йавнипе пĕрлех, уйрăм кружоксенче вĕренеççĕ. „1мĕш май“, Куйбышĕв, Калинин, Телĵмăн йачĕпе тăракан колхозсенче йалхуçалăх ĕçĕсене кăтартулăн вĕçлес тесе, пĕр-пĕрин хушшинче социалисăмлă ăмăртуна вăйлатрĕç. Ку ĕçсемпе пĕрлех районра чылай йалсенче йединоличниксем колхоза кĕресси вăйланчĕ. Çак ернере Березăвка колхозне 3 хуçалăх, Шĕнер колхозне 6 хуçалăх, районĕпе 33 хуçалăх колхоза кĕчĕç.

В. Чернов.

32 çĕнĕ перекет касси

1938 çулхи малтанхи çурçулта Чăваш республикинче 32 çĕнĕ перекет касси уçнă. Вĕсенчен 30 касса йалсенче, 2 касса хуласенче.

Республикăра пĕтĕмпе 112 перекет касси, вĕсенчен 93 касса йалсенче.

Генлейнăн суйа ĕçĕ арканса кайнă

Германири фашисла пичетĕн Чехославакире тухса тăракан хаçатсем çинче пысăк суйа пĕлтерÿ пичетленсе тухнă, ăна Чехославакири компарти тĕпкомĕ „хĕçпăшаллă восстани хатĕрлени“ çинчен йышăннă „циркулĵарĕ“ тесе йат панă. Гитлĕр агенчĕсен-генлейнăвĕцсен алли туса хатĕрленĕ çак суйа ĕç уççăнах арканса кайнă пулсан та, компарти Тĕп Комитечĕн официаллă документĕсем ăна тăрă шыв çине кăларнă пулсан та („циркулĵарта“ компартипе нимĕнле те çыхăнса тăман çынсен йачĕсене кăтартнă), генлейнăвĕцсен хаçачĕсем çак ирсĕр хыпара пичетлеççĕ-ха.

Пĕтĕм Чехословаки пичечĕ генлейнăвĕцсен провокацине тăрă шыв çине кăларать. Ытларах сарăлнă хаçатсем: çак суйа ĕçе генлейнăвĕцсем, Судет облаçĕнче çĕнĕ тытăçусем кăларасшăн туса хатĕрленĕ, тесе çыраççĕ.

Полици темĕнле пĕр Ридĵ йатлă çынна арĕслесен, çапла тăрă шыв çине кăларнисем пĕтĕмĕшпех çирĕпленнĕ. Ридĵ çакна йышăннă: вăл çав „циркулĵара“ пичет валĵи хăй çырса хатĕрленĕ пулнă тата уншăн Судет-нимĕç партин представителĕнчен 800 крон (Чехословакири укçа шучĕ) гонорар илнĕ.

Çав вăхăтрах тата Чехословаки чикки патне Германи çарĕсене тастах куçарса пыни çинчен пĕлтереççĕ. (ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕнче

Шупашкарти строительства çинчен

Августăн 31-мĕшĕнче ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ Шупашкарти строительства ĕçĕсем мĕнле пыни çинчен пăхса тухрĕ. Обком хăйĕн решенинче вăл майăн 8-мĕшĕнче, унтан—майăн 31-мĕшĕнче Шупашкарти строительства çинчен йышăннă решенисене стройка тутаракан организацисемпе строительства организацисем пурнăçа пуçĕпех çителĕксĕр кĕртнине палăртать. Халăх комиссариачĕсен, тĕпри учрежденисемпе хула учреждени руководителĕсем Обком строительства ĕçĕнче тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене хăвăртрах пĕтерессипе çинчен кăтартса панисем тăрăх кирлĕ пек ĕçсем туман. Çавăнпа та чылай стройкăсене, туса пĕтермели вăхăт иртсе кайнă пулсан та, туса пĕтерейменççĕ (880 вырăнлă çĕнĕ шкул, Чăвашсойуз, Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕ, Водосвет тутаракан 8 хватерлĕ çуртсем, грузчиксен общежитийĕ). Родиљнай, детсад çурчĕсене, музыкă училищчин общежитине тума та тытăнман. Водопровода аслăлатасси, Карл Маркс урамне асфаљт сарасси ытла та вăраххăн пырать. Строительствăна паракан укçапа çителĕклĕ таран усă курмаççĕ. Стройтрест ĕç вăйĕ пухас тата рабочисене строительствăра çирĕплетсе хăварас тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсем тумасть. Çавăн пекех строительствăра ĕç тухăçлăхĕ, ĕçĕн пахалăхĕ начар. Рабочисем хушшинче социалисăмлă ăмăртупа стахановлă йухăма сарса йаман. Парторганизацисем рабочисем хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Хула совечĕн, Сывлăха сыхлав тата Коммуналлă хуçалăх Халăх Комиссариачĕсен, Çутĕç Халăх Комиссариачĕн руководителĕсем йĕнчен строительствăна куллен кун йертсе пыни çук.

Обком стройкă тутарттаракан организацисемпе строительствă организацисене тепĕр хут асăрхаттарса, çĕнĕ стройкăсене туса пĕтермели татăклă срукcем йышăннă. Обком йышăннă тăрăх, çĕнĕ шкула çентаберĕн 20-мĕшне, Чăвашсойуз çуртне, Водосветăн 8 хваттерлĕ çуртне тата Карл Маркс урамне асфаљт сарассине—октабĕрĕн 1-мĕшне, водопровода—октаберĕн 15-мĕшне, Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕн 8-хватерлĕ çуртне тата грузчиксен общежитине—çентаберен 10-мĕшне, 24 хватерлĕ çурта, Советсен çуртне, родиљнай, детсад çурчĕсене 1939 çулти йанварĕн 1-мĕшне, музыкă училищчин общежитине—кăçалхи нойаберĕн 1-мĕшне туса пĕтермеле.

ПСК(б)П Шупашкар хула комитетне—хула комитечĕпе хула совечĕн ответлă работникĕсене уйрăм строительствăсем тăрăх çирĕплетсе тухма, стройтрест аппаратне парти работникĕсем парса çирĕплетме, строительствăри рабочисем хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе конкретлă план йышăнма, строительствă ĕçне куллен кун оперативлă йертсе пыма хушнă.

Çавăн пекех тата Обком Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Советне строительствă ĕçĕсем мĕнле пыни çинчен райĕçтăвкомсемпе хула совет председателĕсен, халăх комиссарĕсен, тĕпри учреждени руководителĕсен доклачĕсене итлесе конкретлă решенисем йышăнма хушнă.

Государствă План Комиççине—Советсен çурчĕ, 24 хватерлĕ çурт, водопровод, родиљнай çурт т. ыт. валљи йăвăççемпе кирпĕчсем çителĕклĕ таран тăратмала тума хушнă.

Ĕç лайăхланчĕ

ПĂРАЧКАВ. Канифољпе супăњ савăтĕнчи парторганизацин парторгĕ Звирин парти членĕсемпе кандидачĕсем тата рабочисем хушшинче партилĕ-политикăла ĕçе организацилеме тăрăшмарĕ. Парти историпе политграмăтă кружокĕсен ĕçĕ йăлтах сÿнсе ларчĕ. Çапла начар ĕçленĕшĕн Звирина ĕçрен хăтарнă. Халь кунта çĕнĕ парторг Цыганов йултăш ĕçлеме тытăнчĕ. Вăл парторганизаци ĕçне чылай йĕркелерĕ. Халь ĕнтĕ парти истори кружокĕ кашни уйăхрах пилĕкшер занљати туса иртерет. Çавăнпа пĕрлех Цыганов йултăшăн çитменлĕхĕсене те кăтартмала. Вăл пуçламĕш парторганизацинчи коммунистсене партилĕ порученисем парса, çав порученисене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесе пымасть-ха. Çак çитменлĕхе пĕтерессе шанатпăр.

П. Михайлăв.

Вăрман Йĕнĕшри комсомолĕцсем

ШĂХАСАН. 1933—34 çулсенче Вăрман Йенĕш йалĕнче 4—5 комсомолĕц çеçчĕ. Çамрăксем, ĕлĕкхи йалсенчен уйăрăлса çитейменнипе, тĕн праçникĕсене (сурхури, çăварни т. ыт. те) чыслатчĕç.

Халь çамрăксем колхозăн вулав çуртĕнче кашни каçах пухăнса хаçат-журналсем, кĕнекесем илсе вулаççĕ, шашкăла, биллиардла выљаççĕ, спектакљсем лартаççĕ, политкружоксенче вĕренеççĕ.

Комсомол организацийĕ йалта пысăк вăй пулса тăчĕ. Комсомолĕцсем йалта пур ĕçре те малта пыраççĕ, хуçалăхпа политикăлă ĕçсене иртерне çĕре активлăн хутшăнаççĕ. Хăйсен ĕçне вĕсем йалти çамрăксемпе тачă çыхăнса тăваççĕ. Пухусене комсомолĕцсем час-часах сойузра тăман çамрăксемпе пĕрле иртереççĕ. Çавăнпа та сойузра тăман çамрăксем комсомолĕцсемпе пĕрле колхоз производствинче тата общĕствăлă ĕçсенче хăйсен пултарулăхне кăтартса, комсомол ретне кĕме тăрăшаççĕ. Халь пирĕн йалта комсомолĕцсем 21 çын. Комсомолĕцсем çамрăк ачасемпе хĕрсене комсомола кĕме пулăшаççĕ, вĕсене комсомолăн программипе тата уставĕпе паллаштараççĕ.

Колхозра кашни бригадăрах стена хаçачĕсем тухса тăраççĕ. Вĕсен ответлă редакторĕсене пурне те комсомолĕцсенчен çирĕплетнĕ.

Пирĕн колхозри политкружока ваттисем те, çамрăксем те пурте çÿреççĕ. Занљатисене пропагандистсем аван хатĕрленсе пыраççĕ.

Комсомол организацин ĕçне аван йĕркелес тесен, чи малтан йертсе пыракансен хăйсен ĕçре пример кăтартмала. Пирĕн комсомол комитечĕн çекретарĕ А. Иванов йултăш ĕçре пример пулса тăрать. А. Иванов ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет, хăйĕн ĕçри хастарлăхĕпе ытти комсомолĕцсене те ĕçлеме вĕрентсе, хавхалантарса пырать.

И. Бычков.

Ĕнер шкулсенче

Учебник страници уçăлчĕ

Пайан, темĕнле, пачах урăхла кун пек туйăнать. Чăнах, урăхла. Пайан—çĕнĕ вĕренÿ çулĕн пĕррремĕш кунĕ. Тăван çĕршывăн телейлĕ те хаваслă çамрăкĕн сăн-сăпачĕ çинче Сталинла Конституцин вĕренÿ прави йăлкăшать. Вăл унпа туллин уса курать.

Пайан Совет çамрăкĕ ытти кунхисенчен темĕн чухлĕ ир вăранчĕ. Кашнин умĕнче ыйту:

— Хăçан 9 сехет çитет?

9 сехетре вăл çĕнĕ вăйпа, çĕнĕ пултарулăхпа, çирĕп сывлăхпа вĕренме тытăнать.

Чăвашсен йалхуçалăх рабфакĕн хăшпĕр студенчĕсем 8 сехетрех шкул алăкĕ умне çитсе тăчĕç.

— Сывă пултăр çĕнĕ вĕренÿ çулĕ!

Кашни студент шкула тулли кăмăллăн, хаваслăн пырса кĕрет.

Умра расписани. Вăл малтанхи урок хăш кабинетра пулассине пĕлет. Халĕ ĕнтĕ хăçан звонок пулассине кĕтет.

8 сехет те 50 минут. Малтанхи звонок. Çамрăксен кăкăрĕ тулхăрса тухас пек тата туллин сывларĕ. Кĕç учебникăн малтанхи страници уçăлать... Чăтмала мар: тăван çĕршывăн аслă Конституцийĕ, кашни студентăн сывăх тусĕ, сывăх йултăшĕ Сталин çинчен йурă пуçлас килет...

Иккĕмĕш звонок. 9 сехет. Преподавательсем пырса çитрĕç. Вĕренÿ çулĕ пуçланчĕ.

Лайăхрах пахалăхлă вĕренĕр, йултăшсем!

***

Чăвашсен йалхуçалăх рабфакĕ вĕренÿ çулне аван кĕтсе илчĕ. Общежитисем хатĕр тата çителĕклĕ.

Кăçал çĕнĕрен пĕрремĕш курса 60 çын илнĕ, вĕсенчен саккăрĕшĕ, дирекци урлă ыйтса килĕсене кайнă пирки, малтанхи урока çитеймерĕç. Ытти курссенчи студентсем 9 сехет тĕлне пурте пухăнса çитрĕç.

Ив. Мосейĕв.

Малтанхи урок

Çентабĕр ирĕ. Ку ир совет çамрăкĕсен чи телейлĕ ирĕ. Çамрăксем пурте çутă кантăклă таса шкулсем йĕннеле утаççĕ. Шкулсем йĕнчен хаваслăн шăкăлтатса калаçни, савăнăçлă кулă илтĕнет. Çакă сас-чĕве çурхи хĕвелпе чечекленнĕ пахчари вĕçен кайăксен йуррипе танлаштарма пулать.

Пирĕн çамрăксем икĕ уйăх каннă хыççăн шкул алăкĕ умĕнче пĕр-пĕрин аллисене йултăшла чăмăртаççĕ, çуллахи вăхăтсене мĕнле иртерни çинчен калаçаççĕ. Аслă шкулсемпе училищчăсене çĕнĕ çынсем килнĕ. Çĕнĕ паллашу, çĕнĕ йултăшсем... Пуçламĕш шкулсенче кăçал çеç пуçласа партă хушшине ларакансем. Мĕн чухлĕ телейлĕх, мĕн чухлĕ савăнăç илсе килет совет çамрăкĕсемшĕн çентабĕрĕн 1-мĕш ирĕ.

9 сехет. Клас алăкĕсем уçă. Звонок йăхăрать. Çамрăк ăру классене кĕрсе вырнаçать. Кашнийĕх хăйсен аслă правине—Сталинла Конституци панă вĕренÿ правине тепĕр хут чĕре туллин аса илет. Акă ĕнтĕ вăл праван тивĕçлĕхĕ: çутă клас, йĕри-тавра пĕтĕмпех çĕнĕ, çĕнĕ те таса. Ирĕклĕн вĕрен, тăрăш, отличнă вĕрен!...

Пирĕн çамрăк ĕмĕршĕн чи аслă телей—наукăна тĕпĕ-йĕрĕпех алла çавăрса илесси. Сталинла танхăрти кунçулăмăрта вăйлă та пултарулă пулас тесен—„Вĕренмеле, вĕренмеле татах та вĕренмеле".

Пирĕн валљи вĕренме, вĕренме татах та вĕренме кĕрлĕ условисене пурне те туса панă. Çитĕнÿсем пысăк. Акă, епĕр Чăваш республикĕнчи аслă шкулсенчен пĕрийĕ—педагогикă институчĕ патĕнче чăрăнса тăратпăр. Йулашки 1—2 çул хушшинче иститутпа йунашар илемлĕ те пысăк çуртсем çитĕнсе ларчĕç. Вĕсем студентсен общежитийĕсем тата педучилищчă. Кунта халăха çутта кăларас ĕç валљи пулас кадрсем çитĕнеççĕ. Халь вĕсем вĕренÿ çулне пуçласа йăчĕç. Епĕр педучилищчă студенчĕсемпе пĕрле пĕрремĕш урокра—чăваш чĕлхи урокĕнче пултăмăр. Калас пулать: çавах та çутĕç органĕсем халăха çутта кăларас ĕçе тивĕçлипе вырăна лартассишĕн çителĕклĕ тăрăшманни пур. Вăл — пĕрремĕш урокрах лайăх палăрчĕ. Чăваш чĕлхин учебникĕ çук. Учебник типографинчен тухман-ха,—тесе пĕлтерет преподавател студентсене. Чăваш чĕлхин çирĕплетнĕ çĕнĕ правилисем те çук-ха. Татах нумайа чăсĕ-ши Наукăпа Тĕпчев Институчĕ орфографи правилисене туса пĕтерес ĕçе?! Вĕсне-хĕрне çитме вăхăт мар-и? Халăха вĕрентес ĕçри çакнашкал чăрмавсемшĕн пирĕн шкулсенче вырăн пулмала мар. Мĕн пур кăлтăксене вĕренÿ çулĕн малтанхи кунĕсенчех пĕтерсе, вĕренÿ пахалăхне тивĕçлĕ вырăна лартмала.

В. Д-н.

Пионерсен екскурçийĕ

Шупашкарти шкулсенче вĕренекенсем 44 пионер çак кунсенче Мускава екскурçине кайса килчĕç.

Вĕсем Мускавра Револјуци музейĕнче, Третйаков галлерейĕнче, Горький йачĕпе тăракан кулљтурăпа кану Тĕп паркĕнче, Планетаринче, зоопаркра, метрополитенра т. ыт. çĕртсе те пулнă.

Йалактивне ĕçе хутшăнтарнă çĕрте

КАНАШ. Массăлă-ăнлантарулă ĕçе кирле вырăна лартнă йалсоветсенче укçа-тенкĕ пухас ĕç лайăх пулса пыма тытăнчĕ. Шаккăл йалсоветĕнчи налог агенчĕ Кошкин Константин тата финанс çекцин руководителĕ Захарăв Давыд йултăшсем тăрăшса ĕçленипе йулашки вунă кун хушшинче 4000 тенкĕ укçа пухнă.

Çĕнĕ Вăрăмпуç йалсовечĕ те укçа-тенкĕ пухас йĕнĕпе йулашки вăхăтра лайăх ĕçлеме пуçларĕ. Çак йулашки кунсенче ку йалсоветĕнче пурĕ 1500 тенкĕ, вăл шутран займ укçи 300 тенкĕ пухнă. Йумансар йалсоветĕнчи налог агенчĕ Уткин йултăш та тăрăшса ĕçлет. Вăл çак ĕçе йалти активиссене хутшăнтарнă. Тĕрлĕ тÿлевсем йĕнĕпе илсен, йулашки кунсенче 1000 тенкĕ укçа пухăнчĕ.

Чылай финанс инспекторĕсем тивĕçлипе ĕçлесе пыраççĕ. 3-мĕш участкăри финанс инспекторĕ Çеменăв Н. йултăш укçа-тенкĕ хурас ĕçĕн учотне районра пуринчен малтан (ийулĕн 28-мĕш тĕлне) туса пĕтернĕ. Вăл августăн 13-мĕшĕнче, çур кун хушшинче, Йаманкасси йалсоветĕнче 3000 тенкĕ укçа пухнă.

Анчах та укçа-тенкĕ пухас йĕнĕпе кайа йулса пыракан йалсоветсем те пур. Сиккасси йалсоветĕнчи налог агенчĕ Зеленов йултăш йулашки вунă кун хушшинче пĕр пус укçа та пухман. Хăй çине хунă питĕ ответлă ĕçе тивĕçлипе туса пыманнине пула, районти финанс пайĕ Зеленова халĕ налог агентĕнчен кăларчĕ.

Арк. Кириллăв.

Лайăх ĕçлекен агентсем

Шăмăршă районĕнче виççĕмĕш кварталта 462.274 тенкĕ укçа пухмала. Халĕ 128.578 тенкĕ пухса, плана 27,81 процент тултарнă.

Шăмăршă районĕнче лайăх ĕçлекен налог агенчĕсем пур. Микишин йалсоветĕнчи налог агенчĕ Воронцов йаланах массăпа сыхăнса ĕçлет. Финанс çекци ĕçне йалсовечĕ лайăх организациленĕ. Çавăнпа та кунта укçа-тенкĕ пухасси те лайăх пырать. Виççĕмĕш квартал планне 56,1 процент тултарнă. Çавăн пекех Асанкассинчи агент Орлов, Чаткас йалсоветĕнчи агент Лукийанăв йултăшсем те лайăх ĕçлесе пыраççĕ.

М. Иванов.

Çекци членĕсен канашлăвĕ

Августăн 27-мĕшĕнче Канаш районĕнчи йалсоветсем çумĕнчи çекцисен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура çекци членĕсем 230 çын пулчĕç.

Канашлу йалсоветсенчи çекцисем ку вăхăта çитсе те тивĕçлипе ĕçлесе пыманнине палăртса, малашне çекцисен ĕçне (уйрăмăнах уй ĕç, хатĕрлев, финанс, выљăх-чĕрлĕх ĕçне) лайăхлатас шутпа обйазательствă илчĕ.

Й. Степанăв.

Коммуние йертсе пынă çĕрте

ШĂХАСАН. Уйкас Кипек йалповĕ ытти йалпосенчен лайăхрах ĕçлесе пырать. Йалпо 12 йала пĕрлештерсе тăрать. Вĕсенче пĕтĕмпе 8 уйрăм. Пĕтĕмпе 1487 член шутланса тăрать.

Çак кунсенче Уйкас Кипек йалпо уполномоченнăйĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура 200 çын ытла пулчĕç.

Йалпо 1935 çулта организацилеңнĕ, вăл хушăра йаланах ытти йалпосенчен малта пынă, халĕ те малта пырать.

1938 çулхи I-мĕш кварталти таварçавăрнăш планĕ тăрăх 195 пин тенкĕлĕх сутмала пулсан, 204500 тенкĕлĕх сутса, плана 104,8 процент тултарнă. II-мĕш квартал планне 102,5 процент тултарнă.

Йалпора лайăх ĕçлекен продавецсем чылай. Романăв плана—115 процент, Иванов—114,5 процент, Иванов И.—107,2 процент, Иванов Н.—101 процент тултарнă. Растратăсемпе, йалпо пурлăхсене çаратакансемпе вирлĕн кĕрешеççĕ. II-мĕш кварталта растратăсем вуçех те пулман.

Йалпо колхозниксене кирлĕ таварсене йаланах вăхăтра кÿрсе килет. Çăкăр, сушкă пĕçерес тĕлĕшпе те аван ĕçлесе пыраççĕ. Йалпон хăйĕн пекарњă пур. Кунта йалпо председателĕ пулса С. Тихăнăв коммунис ĕçлет, вăл хăй ĕçлеме пуçланă хушăра темиçе хутчĕн те премисем илнĕ. Халĕ Тихăнăва, суту-илÿ ĕçĕнче лайăх ĕçлесе пынăшăн, пĕр уйăх çурă ĕçукçипе премиленĕ.

Йалпо уполномоченнăйĕсен канашлăвĕнче лайăх ĕçлекен продавецсене чылай премисем пачĕç. Митрофанăва—йалпо бухгалтерне—учота лайăх йĕркелесе пынăшăн алла çыхмали сехетпе, И. Ивановпа П. Романăв продавецсене кĕсйĕне чикмели сехетпе, Иванова—50 тенкĕ укçа парса премилерĕç.

Дм. Иванов.

А. Радашчĕв

АЊУТĂ

(„Путешествие из Петербурга в Москву" кĕнекерен)

Пÿрт умне çитсе чарăнсассăн, епĕ кибиткăран тухрăм. Çул хĕрринчен инçех те мар йухса выртакан пĕчĕкçĕ çырма çинче арăмсемпе хĕрсем кĕпе чÿхеççĕ. Чунхавалне çĕклентерекен хĕрÿлĕх, пĕтĕм пурнăçăмра хам çинче пуç пулса тăракансăр, анчах халĕ сÿнсе ларнăскер, куçăмсене çак йалти чипер хĕрарăмсем çинеле ывтăнтарчĕ. Вĕсем мĕн пурĕ вăтарăн ытла. Пурте капăр тумланнă: майĕсем уçă, урисем çара, чавсисене хултĕп таранах тавăрнă, шапшурă кĕписене кăштах çĕклесе пилĕк тĕлĕнчен хĕстернĕ, куçĕсем савăнăçлăн йалкăшаççĕ, питçăмартийĕсем çинче сывлăх паллийĕсем çиçсе йаçăмланаççĕ. Вĕсен сăн-сăпачĕсем шăрăх йе сивĕ çавталăкпа куштăркнă пулин те, çапах хитрелĕхне çухатман. Вĕсен сăнĕсенче çамрăклăхăн илемлĕхĕ туллин çуталса çиçет, савăнăçлă кулă чăн чĕререн тухса илтĕнет—кулнă самантра шурă шăл речĕсем курăнса кайаççĕ, шăлсем, слон шăммисенчен таса та çутăскерсем. Ку шăлсем хулари хăшпĕр çăмăлтайсене хавхалантарса тен асран та кайăлтарĕç—ухмаха кăларĕç. Килсе курăр кунта Мускаври йе Петербургри вирĕн йуратнă бойарынкăсем, вĕсен шăлĕсем çинче пăхăр, шăлсене мĕнле таса тытмаллине çавсенчен вĕренĕр. Вĕсен шăл тухтăрĕ çук. Шăлсене кунсерен щоткăсемпе те, порошоксемпе те сĕрсе тасатмаççĕ. Вĕсенчен хăшĕсемпе килĕшетĕр, çăвсемпе сăтăра-çăварăн тăрса калаçăр. Калаçнă чухне тухакан вĕсен сывлăшĕсем, ан хăрăр, сирĕн ÿпкĕрсене нимĕнле чир те йертмĕç. Тен хăвăрăн, хăвăрăн сывлăшăрсем вĕсене чир йертсе хăварĕç... мĕнле чир иккенне калама хăратăп, каласан та есĕр вăтанса хĕрелмĕр-ха та, çапах ман сире тарăхса çиленме пултаратăр. Елле суйса калатăп-им епĕ, тĕрĕс сăмах мар-им? Бойарыњкăсем, сирĕнтен ак хăшĕсен упăшкисем йĕрĕнчĕк хĕрсемпе сĕтĕрĕнсе çÿреççĕ, çавсенчен чир йерteççĕ те вара сирĕнпе пĕрлех ларса çийеççĕ, ĕçеççĕ, сирĕнпе пĕрлех çывăрма выртаççĕ. Йе хăвăр та есĕр хăшĕсем çултаăклăха йе уйăхлăха, йе ерне-лехе—тур çырлахтăр—йе кашни кунлăхах йĕршкесем тупатăр, йăтă пек чупатăр. Пайан паллашатăр та вара, унпала мĕн тăвас теннĕ çавна тунă хыççăн, ыран есĕр ăна манса та кайатăр, пĕлместĕр, хăшпĕр чухне çав арçынпа пĕрре чуптунипех йĕрĕнчĕк чир çаклатса йулнине те туймастăр... Çук, бойарыњкăсем, епĕ сирĕннех аташатăп иккен-ха, сирĕн çинченех калаçатăп. Тен есĕр хăвăрăн сăн-сăпатăрсене тата чĕрĕрсене утăмсерпнех краскăсемпе сăрласа чиперлетесшĕн хыпсăнман пулсассăн, çак сăмахсем те ваккланман пулĕччĕç. Хăлăхе сывă пулăр.

Епĕ çав кĕпе-йĕм чÿхекен хĕрарăмсем çине куçа илмесĕр пăхса тăнă хушăра, сисмен те, кибиткă манран уйăрăлса та кайнă. Епĕ ун хыçĕнчен утма тесе çеç шутланăччĕ, пĕр хĕрачи, сăнран пăхсан çирĕм çулхискер, сулĕпе, паллах, вунçиччĕрен те ытла мар вăл, йĕпе кĕписене кĕвентелесе хулпуççи çине хунăскер, манпа йунашарах, манăн çулпах утма пуçларĕ. Малтанах унтан еп каçару ыйтрăм, унтан унпала калаçу тапратрăм:

— Çавăн чухлĕ нумай кĕпе-йĕмсене йăтса пыма йăвăр мар-ши сана... мĕн йатлă, паллах, пĕлместĕп?

— Анна тесе чĕнеççĕ мана. Йăтса пыма йăвăрах мар. Йăвăр пулсассăн та санран епĕ, барин, хама пулăшма ыйтас çукчĕ.

— Аннушкă чунăм, мĕншĕн çапла хыттăн калатăр. Епĕ сана начар тăвас теместĕп.

— Тавтапуç, барин. Сан пек çутçăварсене час-часах курkалатпăр епĕр. Кайах, уттарах хăвăн çулупа.

— Ањутушкă, епĕ ун пек мар вĕт, есĕ калакансем йĕвĕрлĕскер мар. Ман шутпа, есĕ калакан çутçăварсем вĕсем йалти хĕрсемпе калаçăва çапла мар, тÿрех чуптăвуран пуçлаççĕ. Сана еп чуптăвас пулсан те, хамăн тăван йăмăка чуптунă пек чуптăваттăм.

— Ан çывхарах манăн çумма, унашкал калаçусем сахал мар илтнĕ епĕ. Есĕ мана начар тăвас мар тесе шутлатăн пулсан, вара мĕн тăвасшăн-ха апла?

— Чунăмçăм, Аннушкă, санран ыйтса çеç пĕлес тетĕп епĕ, пур-и санăн асу-аннÿ, ху мĕнле пурăнатăн,—пуйан-и, тулли те хаваслă пурăнăçпа-и, каччу пур-и санăн?

— Вара мĕне кирлĕ-ха вăл сана? Пĕрремĕш хут, çуралнăрăнпа пĕрремĕш хут çакнашкал сăмахсем илтетĕп.

— Çавсенченех пĕлетĕп ĕнтĕ, Ањутă, епĕ йĕрĕнчĕк çын маррине сисетĕн, сана йатласшăн мар еп йе хисеплĕ йатна та варалассшăн мар. Хĕрарăмсем ман йĕвĕрлех йăваш, кăмăлĕсем çепĕç, вĕсене еп çавăнпа йуратататăп. Пуринчен ытла йалти хĕрарăмсене, хресченхĕрарăмĕсене. Вĕсем вĕт хăйсемпе хăйсем мăнаçланмаççĕ, мăнаçлă йурату йĕннеле туртăнмаççĕ. Йуратаççĕ пулсан вара—чун-чĕререн, мĕнпур пек ăшă кăмăлтан йуратаççĕ.

Çак самантра хăйхи хĕрача ман çине мĕнпур туйăмлăхĕпе тинкерсе тĕлĕнсе пăхса тăчĕ. Çаплах пулмалаччĕ те вăл. Йĕрĕнчĕк дворйансем вĕт ман пек мар, вĕсен ирсĕр шухăшпа çĕкленнĕ катмар аллисем йал хĕрĕсене мĕнле лутăрканисене кам пĕлмест. Вĕсен куçĕсене çак хĕрсем шăрпăк вырăнне çеç, выљаса чуна çĕклентермели теттесем пек çеç курăнаççĕ вĕт...

— Есĕ, барин, манпала кулса кăна калаçма шутламастăн пулсан,—терĕ мана Ањутă,—итле, акă мĕн сана калатăп. Атте çук ман, вăл икĕ çул кайала вилсе çĕре кĕнĕ. Килте анне пур тата пĕчĕкçĕ йăмăк. Атте пире хăйĕнчен пилĕк лаша, виçĕ ĕне хăварчĕ. Вак выљăх-чĕрлĕхсем те пур, кайăк-кĕшĕксем те çителĕклĕ, анчах пирĕн килте работник çук. Мана пĕр пуйан хăйĕн ачи валљи, вунă çулхи ачи валљи çураçасшăн та пулчĕ, епĕ килĕшмерĕм. Мĕн тумалаха çав пĕчĕк ачапа: епĕ ăна йуратма пултараймастăп. Вăл çитĕнсе çитнĕ çĕре епĕ вĕт пурпĕрех ватăлатăп, вара вăл йут хĕрарăмсен хыçĕнчен чупма пуçлĕ. Тата çавна та калаçаççĕ, унăн ашшĕ, ывăлĕсем çитĕниччен, çамрăк кинĕсемпе хăй çывăрать, теççĕ. Çавăншăнах та епĕ çав çемйене кайса кĕрес темерĕм. Епĕ хам пеккине тупасшăн. Упăшкана еп çав тери йуратнă пулаттăм, вăл та мана йуратĕччĕ—ку тĕлĕшпе еп иккĕленместĕп. Çамрăксемпе çапкаланса çÿреме йуратмастăп, çапах барин, качча тухас килет ман. Пĕлетĕн-и мĕншĕн?—терĕ Ањутă, йăлкăшса тăракан куçĕсене хупса.

— Кала, чунăмçăм Ањутă, вăтанмасăр кала; айăпсăр тута-çăвартан тухакан сăмахсем пуш сăмахсем мар.

— Акă мĕн каласшăн еп. Иртнĕ çула, шăпах пĕр çулталяк кайала, пирĕн кÿршĕ ачи авланчĕ, ман тантăшах качча илчĕ вăл, епĕр унпала мĕн кĕçĕнренех пĕрле выљаса-кулса ÿснĕ. Упăшки ăна питĕ йуратать, хăй те упăшкине çав тери йуратать—венчет тунă хыççăн вунă уйăхранах ывăл ача çуратса пачĕ. Каççеренех ачине вăл хапха умне илсе тухать, йăпатать. Вăл ун çине пăхса та тăранаймасть—ытарма çук ыра ывăл, сылăхсăр чун. Ачи те амăшне йуратма пĕлекен пулнă ĕнтĕ. Агу, агу тесе калать те амăшĕ, ачи вара кăсса кайсах ахăлтатать. Хам епĕ кунсеренех куççуљ йухтарса куљанатăп: мана та çавнашкал ывăл çĕклеме вăхăт вĕт ĕнтĕ...

Ку самантра еп чăтса тăраймарăм, Ањутăна ытларăм та, чĕрери мĕнпур хĕрÿлĕхпе хыттăн-хыттăн чуптурăм.

— Асту, барин, мĕнле ес ултавçă, манпа выљама та пуçларăн! Кайах, куçран çухал, хăварсам мана мĕскĕн тăлăха,—терĕ Ањутă, куççулĕпе.—Атте сывă пулнă пулсан, çакна курнă пулсан, сана, господин, ахалех каçарас çукчĕ, аванах ăшалантарнă пулĕччĕ.

— Ан йатлаçсам манпала, йуратнă Ањутă, ан йатлаçсам тетĕп, ĕнен, санăн тасалăхна епĕ чуптуни варалас çук. Тасалăху санăн ман куçăмсен умĕнче хĕмленсе çуталать. Епĕ чуптуни вăл сан йĕнне туртăнакан кăмăл хисеплĕхĕн паллийĕ, санпа хавхаланса, чунтан-чĕререн сăрхăнса тухрĕ çав палла. Ан хăра манран, йуратнă Ањутă, хăшпĕр çамрăк господчиксем йĕвĕрех тискер кайăк мар еп... Есĕ çаплах çиленессине пĕлнĕ пулсассăн, чĕререн калатăп, ним парсан та чуптăвас çукчĕ.

— Хăвах шухăшла-ха, барин, чуптунишĕн мĕншĕн çиленес марха, урăххине панă вĕт еп чуна. Тутасем ман такçанах сутăннă, халĕ еп вĕсемпе хам хуçа мар.

— Есĕ мана шалт тĕлĕнтеретĕн. Есĕ ĕнтĕ ав йуратма та пĕлетĕн. Хăвăн валљи ес ху чĕрÿ пекех хăвна килĕшекен тепĕр чĕре тупнă. Телейлĕ пулăн есĕ. Сирĕн хушăрти çыхăнăва никам та татма пултараймĕ... Çапах, кала-ха, йуратнă Ањутă, мĕншĕн-ха вара халех хăвăн тусун ытамĕнче савăнса хавхаланма есĕ тивĕçлĕ мар.

— Ах, барин, мĕншĕн-ха тетĕн. Мĕншĕн тесен, ăна пирĕн киле памаççĕ. Çĕр тенкĕ ыйтаççĕ. Хама ун патне кайма анне чарать: килте аннене пулăшакан, килти ĕçе ĕçлекен епĕ çеç вĕт, пĕччен çеç.

— Йуратать-и вара вăл сана?

— Йуратмасăр. Мĕнле ха ан йураттăр. Пирĕн пÿрт умне каççеренех килет вăл, хам хĕр тантăшăн пĕчĕк ачи çине те унпа пĕрлех пăхса савăнатпăр епĕр... Вăл та çавăн пекех ача ашшĕ пулассăн. Хĕнтерех пулать мана, çапах тÿсме еп тивĕç. Ваньухă манăн Питĕр хулине кайасшăн, кайасшăн та çĕр тенкĕлĕх, хăйне тÿлесе илмелĕх ĕçлемесĕр кайала таврăнасшăн мар.

— Унта ан йар есĕ ăна, йуратнă Ањутă, кайма ан кала. Унта пĕтме çеç кайать вăл. Тăнла. Унта вăл ĕçме вĕренет, кахалланьа, сĕтĕрĕнсе çÿреме хăнăхать, çĕр ĕçне—уйхир ĕçне йуратми пулать, пуринчен ытла унта вăл сана хăвна та йуратма пăрахать.

— Ах, барин, ан хăрат мана,—терĕ Ањутă, кăшт çеç макăрса йамасăр чăтса.

Стаханăвĕцсен çитĕнĕвĕсем

Патăрйел МТС-нчи пиллĕкмĕш тактăр бригади стаханăвла йухăм пăлланин виçĕ çул тултарнине пысăк çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илчĕ. Августăн 25 мĕшне бригадă çăталăк планне 140 процент тара тултарнă. „СТЗ“ трактăрпа 70 гектар сухалас вырăнне 1030 гектар сухаласа, çунтармали материала 3.300 килограм перекетленĕ.

М. Быкăв трактăрист ыраш акнă вăхăтра 24 ретлĕ çейăлкăпа 12,5 гектар акас вырăнне 30 — 35 гектар акнă. Ив. Сигов трактăрист 4 корпуслă плугпа 4,6 гектар сухалас вырăнне 9—10 гектар сухаларĕ.

Çавнашкалах Й. Земцов комбайнер та стаханăвла йухăм виçĕ çул тултарнине пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илчĕ. Вăл çирĕм кун хушшинче 350 гектар тырă пуçтарса, хăйĕн нормине 171 процент тултарчĕ. Çавăн пек ĕçленĕшĕн вăл 1597 тенкĕ укçа тата 25 пăт тырă илчĕ.

Н. Квасăв.

3277 гектар вырса пуçтарнă

Кăçалхи çул Вăрнарти МТС тырпула комбайнсемпе пуçтарса кĕрессипе республикăри ытти МТС-не пример кăтартса ĕçлерĕ. Вăрнар МТС-че ĕçе тĕрĕс йĕркеленĕ, çавăнпа та тырпула комбайнсемпе пуçтарса кĕртес ĕçре пысăк ĕç тухăçлăхĕ курăнчĕ.

Кăçал МТС-ин комбайнсемпе уйран 3100 гектар тырă пуçтарса илмелле пулнă пулсан, 3277 гектар пуçтарса кĕнĕ—плана 104 процент тултарнă.

Уйрăм комбайнерсем уйри тырра пуçтарса кĕртес ĕçре пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартса ĕçлерĕç. В. Архипăв комбайнер 260 гектар вырăнне 432 гектар пуçтарса кĕчĕ. П. Муракăв комбайнер хăйĕн планне 111 процент, К. Михайлăв 107 процент, В. Прокопйĕв 102 процент тултарчĕç. Çичĕ комбайнер хăйсен планне 100 процент тултарчĕç, вĕсен шутне комбайнеркă А. Йугинă та кĕрет.

Халĕ комбайнĕрсем хăйсене çирĕплетсе панă комбайнсене пикенсех йусаççĕ.

Агроном Л. Илйин.

Çуртрисене те çапса пĕтерчĕç

Палтайри (Йетĕрне р.) Буденный йачĕпе тăракан колхоз кĕрхи тырăсене аван пахалăхпа акса хăварчĕ. Пĕтĕмпех суртлă вăрлăхсемпе, вутпуççирен чӳхесе, çейăлкăсемпе акнă.

Палтай колхозĕ йалхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра вĕçлесе пырать. Государствăна пур куљтурăсем тăрăх та тырă парса татнă. Кĕрхи тырăсене, çавнашкалах çуртрисене, пăрçа йышши куљтурăсене пĕтĕмпех çапса пĕтернĕ.

Халь колхоз тырпулсене ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе пама хатĕрленет. Йалхуçалăх ертел уставĕнче кăтартнă фондсене тăваççĕ.

М. Анисимăв.

Государствăна тырă тăратассине вĕçлемеле

Çĕнĕ Ейпеçри (Йелчĕк р.) Чапайĕв йачĕпе тăракан колхоз кĕрхи тырăсене агротехника тăрăх, кĕске срукрах акса хăварчĕ. Ыраш тата кĕрхи тулă лайăх шăтса тухрĕç.

Колхоз авăн та çапса пĕтернĕ. Шутпала государствăна тата машинă-трактăрлă станцине натурплатă тыррине парса тытмала пулнă. Анчах çак ĕçсем колхозра йулса пыраççĕ. Государствăна тырă тăратмали обйазатĕлствăна 70 процент çеç тултарнă, натурплатă тыррине пама тытăнман та. Çакă ĕнтĕ колхоз ĕçе черетпе туса пынине кăтартса парать. Ĕçре черетлĕх пулмала мар. Пур ĕçе те пĕрпĕринпе çыхăнтарса пымала. Кĕске вăхăтрах государствăна тата машинă-трактăрлă станцине тырă парса татмала.

Г. Васильйĕв.

Аш-какай парса татнă

Çĕрпӳ районĕнчи „Çамрăк вăй“ колхоз государствă умĕнчи парăмсене вăхăтра парса татас йенĕпе çулленех лайăх ĕçлет. Фермă, çавнашкалах тата колхозниксем государствăна 1938 çулшăн аш-какай парса татнă.

А. Иванов.

Кĕрхи тырăсем шăтса тухрĕç

ЙЕТĔРНЕ. Кив Тинкеш йалсоветне кĕрекен „Çĕнĕ çул“ тата Максим Горький йачĕпе тăракан, Йуманайĕнчи „Бољшевик“ колхозсем кĕрхи тырăсене Чăваш Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ кăтартса панă срукра акса хăварчĕç.

Халь кĕрхи тырăсем пĕр харăс, тип-тикĕс шăтса тухрĕç.

С. Иванов.

Ĕнесем пысăк тупăш параççĕ

Кирăв облăçĕнчи „Ленинская искра“ колхозри таварлă сĕт-çу ферми—облăçра чи лайăххи шутланать. Фермăра майракалă шултăра выљăхсем 142 пуç, вăл шутран сăвакан ĕнесем 83 пуç пур.

Паллă дойаркă - орденоноскă ССРС Верховнăй Совет депутачĕ Дуркина 1937 çулта сĕт сунă таппăхăрта „Белуга“ йатлă ĕнерен 7.033 литр сĕт суса илнĕ. Кăçалхи çул Дуркина йулташ 5.020 литр суса илнĕ, çак çул вĕçне вăл „Белуга“ ĕнерен вунă пин литр сĕт суса илме шанать.

Фермă колхоза пысăк доход парать. Сăмахран, çак çулта вăл 187 пин тенкĕрен кайа мар—иртнĕ çулхинчен икĕ хут нумай доход памала.

(ТАСС).

Канаш—Шупашкар чукунçул строителстви

Пайанхи ответлă задачăсем

Кăçал ийунĕн 4-мĕшĕнче Канашпа Шупашкар хушшинче лини хывса çитерсе, Чăваш республик столицине—Шупашкар хулине çĕр шывĕри ытти чукунçулсемпе çыхăнтарнă. Анчах та чукунçула туса пĕтерсе хута кĕртме тата пысăк ĕçсем тумала пулнă. Вăл ĕçсем хăйсен виçи тата пахалăх тĕлĕшпе те иртнĕ 1937 çулхи ĕçсенчен пысăккăн уйрăлса тăраççĕ.

Кăçал чукунçул строителствинче 264 пин кубла метр çĕр чавса купаламала, тимĕртен тата бетонран тунă трубасене туса пĕтермеле, йăвăçран кĕперсем — 118 тваткал метр чухлĕ, лини çине 152 пин кубла метр хăйăр турттарса сармала тата ыт. нумай ĕçсене тумала пулнă.

Çулйĕр Халăх Комиссарĕ Л. М. Каганович йултăш кăтартса панă тăрăх, çав ĕçсене пурне те октăберĕн 1-мĕш тĕлне пурнăçа кĕртсе çитермеле. Анчах августăн 25-мĕшĕ тĕлне строителствăн кăçалхи планне 56,4 процент çеç тултарнă. Уйрăмăн илсен: çĕр ĕçне тăвас плана 52,4 процент, трубасем тăвас плана 64,7 порцент, кĕперсем тăвас плана 93,7 процент, лини çине хăйăр сарас плана 43,5 процент, пурăнмали çуртсем тăвас плана 22,4 процент çеç тултарнă.

Çакă вăл условисем çуккипе мар, ĕçе кирлĕ пек çирĕп йĕркелеменнинчен килнĕ. Чукунçул строителствинче инженерла - техниклă работниксем производствă организатăрĕсем пулса тăрайман-ха. Вĕсем ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн, плана тултарассишĕн тимлĕн кĕрешмеççĕ. Рабочисене плана тултарассишĕн кĕрешме организацилеме стаханăвла йухăма вăйлатсах пырассишĕн тăрăшмаççĕ.

Пĕрремĕш прораб участки (начаљникĕ Розанăв) çулталăкри плана 25,6 процент, иккĕмĕш участкă (начаљникĕ Антропăв) 44,8 процент, виççĕмĕш участкă (начаљникĕ Голубĕв) 79,8 процент çеç тултарнă. Ытти участкăсем те нумай мала кайман. Тĕрĕссипе каласан, плана тултарас патне çывхарнă участкăсем пачах çук.

Строителствă ĕçне туса пырассине материалсем вăхăтра тăратманни те пысăк чăрмав кӳчĕ. Кăмрăк вăхăтра тăратман пирки икĕ екскаватăр тата пăравуссен паркĕ ăнăçлăн ĕçлеймест. Сăмахран, ийуњ уйăхĕнче 660 тоннă кăмрăк кирлĕ пулнă пулсан, 335 тоннă çеç илнĕ, ийуљ уйăхĕнче 760 тоннă кирлĕ пулнă, 340 тоннă çеç илнĕ. Август тата çентăбĕр уйăхĕсенче куллен 35-шер тоннă кирлĕ, Хусан чукунçулĕнчен августăн малтанхи вунăкунлăхĕнче 10 тоннă, иккĕмĕш вунăкунлăхра 18 тоннă çеç илнĕ.

Йăвăç материалсем те çителĕксĕр. Кăçал строителства валљи йăвăç материалсем пĕр кубла метр та илмен. Строителствăра кирпĕч çитмест. Ку çуртсем тăвас ĕçре чăрмав кӳрет. Малтан тумали çуртсене туса çитерме строителствăна тата 500 пин кирпĕч кирлĕ.

Çулйĕр Халăх Комиссарĕн заместителĕ Бељский йулташ ийунĕн 25-мĕшĕнче кăларнă приказра чукунçул строителствине кирлĕ материалсем тăратас йенĕпе татăклă кăтартусем панă. Анчах Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн центрти организацисем ăна пурнăçа кĕртмеççĕ.

Ĕç вăйĕ çитменни строителствăна хăрушлăх умĕнче тăратать. Пайанхи куна ĕç вăйĕ 38,5 процент çеç пур. Районсенчи парти тата совет организацисем ĕç вăйĕ пухас тĕлĕшпе строителствăна начар пулăшаççĕ. Колхозсем çынсене чукунçул çинче ĕçлеме икĕ-виçĕ кунлăха çеç йараççĕ. Çавна пула ĕç вăйĕ ӳсмест, ĕç вăйĕн йухăмĕ кăна ӳсет. Вăл ĕçе йĕркелĕ организацилеме чăрмантарать.

Ĕç вăйĕн йухăмĕ пысăк пулни строителствăна пысăк сийен кӳрет. Стройкăна сахал вăхăтлăха ĕçлеме пыракан колхозниксем ĕçе хăнăхса çитеймеççĕ. Çавăнпа нормăна та тултараймаççĕ. Стройкăра йалан ĕçлекен кадрсем нормăна ытлашшипех тултарнă вăхăтра, вĕсем 60—70 процент çеç тултараççĕ. Сăмахран, Трушин йулташ нормăна 230 процент, çĕр чавнă çĕрте ĕçлекен Царйов йулташ 312 процент, Тимофейĕв—201 процент, каменщик Цветков 179 процент тултараççĕ.

ПСК(б) Парти Обкомĕ тата Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ чукунçула октăберĕн 1-мĕш тĕлне туса пĕтерме кăтартса парса решени йышăннă. Кăна пурнăçа кĕртсе çитерме колхозсем тата йалсоветсем тимлĕн пулăшни кирлĕ.

Парти Обкомĕ хăйĕн решенийĕпе ПСÇЛКС обкомне строителствăра ĕçлеме кайас текен 1000 комсомолĕца организацилеме хушнă. Çавнашкалах парти Обкомĕ районри организацисене ĕç вăйĕ çителĕклĕ парса, ăна строителствă пĕтиччченех ĕçлеме çирĕплетме хушнă.

Канаш—Шупашкар чукунçул строителĕсен, колхозниксемпе рабочисен тата инженерлă-техниклă работниксен хисеплĕ задачи—парти Обкомĕн решенине ăнăçлăн тата вăхăтра пурнăçласси пулать. Ăна пурнăçлама чи малтан строителствăра çирĕп йĕркелĕх туни кирлĕ. Рабочисем валљи тухăçлăн ĕçлеме условисем туса памала, массăлă ĕçе вăйлатмала, стаханăвла йухăма çĕклемеле. Кашни инженерăн, колхозникăн, рабочин хăйĕн çинче пысăк ответлăх пулнине туйса ĕçлемеле.

Строителсем, колхозниксем тата районсенчи партипе совет организацисем пурте хĕрӳлĕн, пысăк тимлĕхпе ĕçлесен, чукунçула октăберĕн 1-мĕшĕ тĕлне хута кĕртетпĕр. Ăна тума пирĕн пур майсем те, условисем те çителĕклĕ.

Розанăв.

Йертсе пырас ĕçе çĕнĕ çынсем пырсан

КАНАШ. Рессорсемпе пружинсем тăвакан цех иртнĕ вăхăтсенче вакунсем йусакан савăтри начар ĕçлекен цехсен шутĕнче тăнă. Вăл цех рессорсем кăларас плана тултарман пирки вакунсене йусас ĕç чаранса тăнă кунсем те сахал мар пулнă.

Цех начаљникĕ пулса çамрăк инженер Леовтйĕв йулташ ĕçлеме пуçласан, цех хăйĕн ĕçне кĕске вăхăтрах лайăхлатрĕ. Ийуњпе ийуљ уйăхĕсенче плана ăнăçлăн пурнăçа кĕртрĕ. Август уйăхĕнче тата та лайăх тĕслĕхсем пачĕ. Уйăхри плана 24 кун хушшинчех 90 процент тултарнă.

Цех начаљникĕ Михаил Константинăвич Леонтйĕв йулташ хăйĕн ĕçĕсем çинчен çапла каласа парать:

— Цехра ĕçлеме тытăнсавах епĕ пуринчен малтан кадрсемпе интереслентĕм. Мĕн куртăм-ха епĕ? Цехра рессорсем тума пултаракан квалификацилĕ рабочисем виççĕн пулнă. Тĕп ĕреххĕн сăнаса пăхрăм та, вĕсем тăрăшса ĕçлесен те цех планне тултарса пыма ĕлкĕрейменнине куртăм. Анчах квалификацилĕ рабочисем ăçтан та пулин илме шанчăк çук. Çавна шута илсе, епĕ цехра нумай вăхăт рабочи пулса ĕçленĕ рабочисене Трунăв, Йегорăв, Пименăв йулташсене вĕрентме тĕллев тытрăм. Вĕсене квалификацилĕ рабочисем Петров тата Царйов йулташсем çумне çирĕплетрĕм.

Тепĕр уйăхран вĕсем техминимум пачĕç. Ун хыççăн вĕсене хăйсем тĕллĕн ĕçлеме тăратрăм. Халĕ Трунăв йулташ цехри паллă стаханăвĕцсенчен пĕри. Вăл производствă техникине кĕске вăхăтрах алла илчĕ. Сменăра 10 рессор тăвас вырăнне 20 рессор туса пыма тытăнчĕ. Йегорăвпа Пименăв йулташсем те лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем нормăна 125—150 процент тултараççĕ.

Анчах калас пулать, савăт руководителĕсем, партипе профсойуз организацисем йертсе пырас ĕçре анчах пынă йулташсене тивĕçлĕн пулăшу памаççĕ-ха. Ку Леонтйĕв начаљник пулса ĕçлекен цех ĕçĕсенчен те паларать. Ийуљ уйăхĕнче енерги пулман пирки цех 49 сехет простой тунă. Пĕтĕм савăт ĕçне лайăх йĕркеленĕ пулсан, вăл хисепе чылай чакарма май пулнă. Леонтйĕв плана тултарассишĕн пысăк тимлĕхпе тăрăшать. Ăна пулăшса, вĕрентсе пымала.

В. Ласточкин.

Васильйĕв йулташăн примерлă ĕçĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Упнерти „Труд“ ертел членĕ—алăстаç Г. Васильйĕв йулташ кирпĕч тăвас ĕçре 18 çулта чухнех ĕçлеме тытăннă. Кăçал вăл социалисăмлă ăмăртăва хутшăнса ĕçлеме тытăннăранпа ĕç тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе никăçанхинчен пысăк ӳсĕм турĕ. Нормă тăрăх унăн куллен 750 кирпĕч çапмала. Вăл 1.200 кирпĕч çапать. Çавна пула унăн ĕç укçи хисепĕ те нумай ӳсрĕ.

Васильйĕв производствăра стаханăвла ĕçленĕ вăхăтрах, колхозăн ытти ĕçĕсене те активлăн хутшăнать. Кăçал çулйĕр бригадин бригадире пулса ĕçлет. Бригадă 1100 лав хăйăр турттарса хăйĕн планне ытлашшипех тултарнă. Бригадă çумне çирĕплетнĕ çулсене йалан лайăх пăхса тăраççĕ.

М. Г.

План тунă, ĕçĕ çук

Куславкка комбиначĕ техникă тата оборудованисем тĕлĕшĕнчен хамăр республикăри вăйлă, пысăк предпрйатисенчен пĕри шутланать. Унта çĕнĕ, пысăк машинсемпе станоксем. Пур цехсенче те пĕтĕм ĕçсене тенĕ пекех механисăмсемпе тăваççĕ. Апла пулин те комбинат производствă планне тултарас йенĕпе йулса пырать. Малтанхи çур çул планне 69,2 процент, ийуљти плана 73 процент çеç тултарнă. Август уйăхĕнче те ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе палăрмалăх улшăнусем туман.

Комбинат мĕншĕн начар ĕçлет? Сăлтавсене таçта шырама кирлĕ мар, вĕсем комбинатра. Акă савăт ĕçне планлассине тата чĕрĕ таварсем тăратмали графике илер. Плансем тăвакан пай халĕ те 1938 çулхи плана туса пĕтермен. Çавăнпа цехсем çирĕп плансăр ĕçлеççĕ. Апла пулсан графикпе ĕçлесси çинчен каласмали те çук. Августăн 23-мĕшĕнче типĕтекен цех стољарнăй цеха кирлĕ мар йăвăç материалĕсем 3 вакун панă. Çавна пула стољарнăй цехра простой пулнă. Ку ĕнтĕ цехсен ĕçне планламанни çинчен калать.

Оборудованисемпе тата станоксемпе туллин усă курассине те йĕркелемен. Çуртйĕр хатĕрĕсем тăвакан цехра „Рубинзон“ тенĕ станок 50 процент çеç ĕçлет. Ăна туллин вăйпа ĕçлеттерме мотора улăштарни çеç кирлĕ. Анчах никам та ун çине çавăрăнса пăхмасть. Стољарнăй цехра та хăшпĕр станоксем ĕçлемеççĕ. Вентиљатăр йĕркелĕ ĕçлемест. Типĕтекен цехра лебедкăсене йусаман пирки, рабочисем вакунсене те хăйсем тĕкеççĕ.

Комбинатăн куллен кирлĕ таварсем кăларассипе вăйлатма пысăк условисем пур. Цехсен отхочĕсенчен чаплă таварсем тума пулать. Ку ытупа руководителсем те, комбинатри партипе совет организацисем те интересленмеççĕ. Çавăн çинчен калать хăма çуракан цехри утиљ цехне пĕтерсе лартни те. Вăл цех май уйăхĕнченпе ĕçлемест. План тăрăх цехăн кăçал 3500 кубла метр йăвăç материалсем кăлармала пулнă, 830 кубла метр çеç кăларнă. Мĕншĕн ĕçлемест? Комбинат руководителĕсем ĕç вăйĕ çукки çине йăвантарма пикенеççĕ. Тăрăщнă пулсан 20 çын тупма май пулнă. Силовой станцинчи пĕр хуран ĕçлеме чарăнса ларас хăрушлăха пĕтерме халех арматурă тата трубасем кирлĕ. Вĕсене тупса парассишĕн васкакан çук.

Комбинат ĕçне тĕлсĕр организацилени ĕçукçи фондне ытлашши расхутлассипе патне илсе пынă. Çичĕ уйăх хушшинче 234 пин тенкĕ ытлашши расхутланă. Ку комбината финанс хуçалăхĕ тĕлĕшпе йăвăрлăха кĕртсе тăратрĕ. Августăн 25-мĕшĕ тĕлне комбинатăн дебиторла парăм 307 пин тенкĕ пулнă. Ку парăма хăвăрттăн пĕтерме май пур. Складра выртакан 700 пин тенкĕлĕх продукцине вырнаçтарни кирлĕ.

Комбинатăн чĕрĕ таварсем те çителĕксĕр. Чĕрĕ таварсем илме тунă догăвăрсене пурнăçа кĕртмен. Комбинат хăйĕн парăмĕсене халех татмасан, чĕрĕ таварсем малашне илесси те йăвăрланма пултарать.

Комбинат руководителĕсем нумай пулмасть сăтăрçăсен сийенлĕ ĕçĕсен йулашкисене пĕтерме план тунă. Анчах ĕçĕ çук-ха. Комбинат прорывран халĕ те тухаймасть.

А. Мошков.

Грави сийĕ

Çĕмĕрлери „Бољшевик“ савăт техникĕ Васильйĕв йулташ августăн 17-мĕшĕнче Сăр шывĕ хĕрĕнче грави тата пысăк пĕрчĕлĕ хăйăр сийĕ тупнă. Ку вырăн Çĕмĕрлерен виçĕ километртра, пионерсен лагĕрĕ патĕнче. Малтанласа шутланă тăрăх, грави сийĕ 10.000 кубла метр шутланать.

Кăтартнă строителствă материалĕсем Çĕмĕрле хулишĕн пысăк вырăнта тăраççĕ. Вĕсемпе усă курма тытăнсан, Çĕмĕрле хули строителствăсем валљи грави тата хăйăр ытти районсенчен кӳрсе пырас йенĕпе пулакан ытлашши расхутсенчен хăтăлать.

Çакна шута илсен грави сийĕ тупни Çĕмĕрле хулине пысăк перекет пама пултарать. Вăл çакăнтан та лайăх курăнать: комбинат йе тата „Бољшевик“ савăт халĕ пĕр кубла метр грави кӳрсе килме вăтамран (ку хисепе пĕтĕм расхутсене кĕртнĕ) 169 тенкĕ те 88 пус расхутлаççĕ. Сăр хĕрринчи грави сийĕпе усă курма тытăнас пулсан, пĕтĕм расхутсене (ĕç вăйĕ, турттарасси т. ыт. те) шута илсен те пĕр кубла метр гравийе вырăна çитерме 29 тенкĕ йе кăшт ытларах çеç тăрать. Çапла вара кашни кубла метр пуçне 140 тенкĕ ытла укçа перекетленет. Ку çеç мар, вăл бетонпа тимĕртен сооруженисем тунă çĕрте усă курнисĕр пуçне, гравипе промышлĕннăçри, çавнашкалах ытти çуртсен урайĕсене тунă чух та усă курма пулать.

Кунти хăйăр та пысăк тупăш пама пултарать. Çавăнпа Çĕмĕрле райĕçтăвкомĕн халех вăл хăйăрпа усă курас ыйтăва татса памала.

Иваницкий.

Йалсовет активĕпе çекцисен ĕçне хакламан çĕрте

Йалсовет çумĕнчи çекцисем йалти актива пĕрлештерсе тăраççĕ. Çак çекцисем урлă нумай ĕççынисем советсен ĕçне анлăн хутшăнаççĕ. Партипе правителствă решенисене ĕççыннисене ăнлантарса панă тата вăл решенисене пурнăçа кĕртнĕ çĕрте çекцисем паллă вырăнта тăраççĕ.

Хăшпĕр çĕрте çекцисен ĕçне хакламаççĕ. Шупашкар районĕнчи Чăкăр йалсовечĕ çумĕнче 1936 çулта 8 çекци организациленĕ. Вĕсенче 74 член тăрать. Пысăк вăй. Пĕтĕм актив çекцисем тавра пĕтĕçнĕ. Анчах никам та йертсе пыманнине пула, пур çекцисем те ĕçлеме пăрахнă, активы сухатса пĕтернĕ. 1936 çултанпа çекцисен (финанс çекцисĕр пуçне) пĕр канашлу та, пĕр лару та пулман. Финанс çекцийĕ те пачах çителĕксĕр ĕçлет. Ийуљ уйăхĕнче тата çĕнĕ зайом тухсан финанс çекци членĕсен канашлăвĕсем пулса иртнĕ. Унтанпа укçа-тенкĕ пухас плана тултарсси мĕнле пыни çинчен пĕр хут та сӳтсе йавман. Финанс çекци членĕсем укçа-тенкĕ пухас ĕç мĕнле пынипе интересленмеççĕ, ĕçре налог агĕнтне пулăшса пыни çук. Йалсовечĕ те çак ĕçе тивĕçлипех хутшăнман. Çакна пула виççĕмĕш квартăл финанс планне 20 процент ытларах çеç тултарнă. Çĕнĕ зайома 1.500 тенкĕлĕх çырăнnă пулсан, укçа 25 тенкĕ çеç пухнă. Йалсовечĕпе зайом уполномочĕннăйĕсем 6 çын шутланаççĕ, вĕсем пĕри те ĕçлемеççĕ. Хăйсем те зайом укçи тӳлемен.

Чăкăр йалсовечĕ хуçалăхлă-политикăлă ĕçсене пĕрне те вăхăтра пурнăçласа пыраймасть. Августăн 20 мĕшне илсен государствăна аш-какай тăратас плана 50 процент, сĕт тăратас плана 86,3 процент анчах тултарнă.

Хуçалăхлă - политикăлă ĕçсене пурнăçлас ĕçре актив мелта пымала. Кунта ун пек мар-ха.

Шĕнерпуç йалсовечĕ çумĕнчи комсод председателĕ Йефремăв ĕçе йапăхтарса йанă. Укçа-тенкĕ пухас ĕçре налог агĕнчĕсемпе инспектăрсене пулăшмасть. Налог, страховани тата ытти тӳлевсене хăй те пĕр пус та тӳлемен. 1938 çулшăн аш-какай 15 килограм çеç панă.

Çĕнйал Уйкасси йалсовечĕ çумĕнчи çекцисем те тивĕçлипе ĕçлемеççĕ. Йалсоветĕче 11 çекци. Финанс çекцийĕ (руководителĕ Чайникăв) виççĕмĕш квартăл финанс планне сӳтсе йавнă. Çекцин план çук. Çакна пула ĕç кирлĕ пек пулса пымасть, Финанс çекци членĕсем укçа-тенкĕ пухас ĕçре хутшăнса ĕçлеменнине пула, виççĕмĕш квартăл планне 20 процент анчах тултарнă.

Пур йалсоветсенче те хатĕрлев çекцийĕсем пур. Вăл çекцисен те государствă умĕнчи обйазатĕлствăсемпе хатĕрлевсене пурнăçлас ĕçре тăрăшни кирлĕ. Çĕнйал Уйкас йалсовечĕ çумĕнчи хатĕрлев çекцийĕ ку йенĕпе ĕçлемест. Уйкассинчи йединоличниксенчен нумайăшĕ государствă умĕнчи обйазатĕлствăсене тултарса пымаççĕ. А. Герасимăв 1937 çулшăн 4 килограм та 700 грам аш-какай парса татман, кăçалхишĕн пĕрте паман. Укçа-тенкĕ пĕр пус та тӳлемен. 1937 çулшăн 250 килограм çĕрулми паман. Т. Иванова иртнĕ çулшăн та, кăçалхишĕн те аш-какай паман.

Кун пек тĕслĕхсем татах пур. Çаксем ĕнтĕ райĕçтăвкомсемпе йалсовечĕсем çекцисемпе тата йалсовет активĕпе ĕçлессине тивĕçлĕ хакламаннипе пĕлтереççĕ. Шупашкар райĕçтăвком председателĕн заместителĕ Федăрăв йулташ: „çекцисемпе ĕçлеме вăхăт çук“, тет. Райĕçтăвкомăн пĕр пайĕ те çекцисене йертсе пырас тĕлĕшпе план туман. Çакна пула ĕнтĕ чылай йалсоветсенче çекцисем йăпăр ĕçлеççĕ, йе пачах та ĕçлемеççĕ. Кун пек ĕçлеме йурамасть. Çекцисен ĕçне тивĕçлĕ вырăна лартмала.

Т. Майорăв.

— Çитменнине тата, Аљута, ăна пĕр-пĕр дворйанин çуртĕнче ĕçлеме тĕл килсессĕн, вăра унăн пĕтнĕ пуçĕ çавăнтах пулать. Итле есĕ, господасен примерĕ çӳлти чинсене чир йертет, çӳлти чинсем çав чире айалти чинсене парнелеççĕ, айалти чинсемпе пĕрле вара çав пăсăк чирĕн наркăмăшĕ йала та килсе кĕрет. Кам мĕн курать, çав çавна тăватех.

— Мĕн тăвас-ха. Апла пулсассăн манăн ĕмĕр-ĕмĕрех унăн арăмĕ пулмасăр йулас-им? Ăна авланма вăхăт çитнĕ ĕнтĕ. Йут хĕрсем пат не çӳремест вăл. Мана ун патне йамаççĕ. Ăна тепĕр хĕр качча тухас пулсан епĕ, ун чухне вара епĕ хуйхăрсах вилетĕп...

Ку сăмахсене Аљута вĕри куççуљ йухтарса каларĕ.

— Çук, йуратнă Аљута, итле. Есĕ ыранах тусу патĕнче пулатăн. Илсе кĕр-ха мана хăвăн анну патне.

— Акă кунтах вăл, акă пирĕн çурт. Кăштах иртсе кай-ха есĕ. Атту пĕрле кĕнине анне курсан тем тума пултарĕ. Паллах, хĕнес çук вăл мана, çапас çук, çапах унăн пĕр сăмахĕ те темиçе çапнинчен хытăрах мраттарĕ.

— Çук, Аљута, санпа пĕрлех кĕретĕп,—ку сăмах çине ответ кĕтмесĕрех хапхаран кĕтĕм те, пусма тăрăх пӳрт алăкĕ патнелле утрăм. Аљута ман хыçран кăшкăрса йулчĕ:

— Барин, тăр-ха, чарăн!

Ăна еп итлесе тăмарăм. Пӳрте кĕресенех Аљутăн амăшне „куртăм. Вăл чуста çăрать. Йунашарах сак çинче унăн пулас кĕрӳшĕ ларать. Нумай шухăшласа тăмасăр-тумасăр карчăка еп хăйĕн хĕрне никама та мар, Ваљухăна çеç качча памалли çинчен систертĕм, йатарласа çав ĕçпе килтĕм, ку ĕçри чăрмавсене сирсе йамалли пур майсене те пĕлетĕп, терĕм.

— Тавтапуç сана,—терĕ карчăк.—Вăл чăрмавсен нуши çук ĕнтĕ текех. Ваљухă йурийех килнĕ ак, амăшĕ ăна пирĕн пата килме килĕшӳ пани çинчен мана пĕлтерме килнĕ. Çитес вырсарникун туй пулать.

— Апла-тăк, пырам-ха еп, Аљутăна хам йатпа хулăм укçи парам.

— Сăмахушăн та тавтапуç. Боярсем хĕрсене ахаљтенех хулăм укçи памаççĕ. Аљутăна ес мĕн те пулин тунă та, çавăншăн çеç хулăм укçи парас тетĕн пулсассăн—çав çылăхушăн сана тура ахалех касармĕ: укçуна еп илместĕп. Есĕ ырă çын, ырă та пирĕн пек мĕскĕнсенчен кулма шутламастăн пулсассăн та, пурпĕрех, çапах сан укçуна еп илместĕп—пĕлсен çынсем мĕн калĕç. Сахал и çавнашкал çынсем.

Епĕ çакăн хыççăн, ăслă та таса чунлă çынсен образĕсене йалтах çеç тупма пултарнă хыççăн, тĕлĕнмесĕр чăтса тăраймарăм. Çав самантрах Аљута пӳрте кĕчĕ, мана вăл амăшĕ умĕнче мухтарĕ. Епĕ каллех вĕсене манран укçа илме сĕнтĕм, хăйсен валљи çурт туса лартма йуратăр тесе укçана Ваљуха аллине пама пикентĕм. Вăл мана каларĕ:

— Тавтапуç, барин. Манăн икĕ вăйлă аллăм пур, çавсемпе еп çурт та, тем те тума пултарăп.

Епĕ кунта пулни вĕсене кăмăллăх мар иккенне часах туйса илтĕм. Тухрăм. Хамăн кабиткă патне кайала таврăнтăм...

Аљута, Аљута! Манăн пуçа çавăртăн есĕ, хăвăн ăслă та таса, пĕр вăйсăр кăмăлупа чĕрене вут хыптартăн. Меншĕн вуннилĕк çул каярах сана еп тĕл пулаймарăм-ши?

Митта Петĕрĕ куçарнă.

Китайри вăрçă

Центрти Китайра Йанцзы йуханшывĕ патĕнчи фронтра чукунçул тăрăхĕнче (Цзўцзйанран кăнтăрала) тата Жуйчан патĕнчи сăртла вырăнсенче хыттăн вăрçаççĕ. Августăн 27-мĕшпе 28 мĕшĕнче Йапони çарĕсем Жуйчан патĕнче Китай позицисем çине вунвиçĕ хутчен атакăлана. Китайĕцсем вĕсен пур атакисене те сирсе пăрахнă. Йаповĕцсен пĕр полка йахăн пĕтнĕ. Жуйчан патĕнчи çапăçусенче Йапони артиллерийĕ вĕлерекен газсем тултарнă снарйадсем пурĕ 50 кăларса йанă.

Йанцзы шывĕн çурçĕр çыравĕнче хайар çапăçусем Љуаљпе Хошаљ районĕнче пыраççĕ.

Августăн 29-мĕшĕнче Йапонин 48 самољочĕ Цзиншаљ хули çине (Хаљкоуран çурçĕр-хĕвеланăç йенне) тискерĕн бомбăсем пăрахнă. Фугаслă бомбăсемпе вут тĕртсе йаракан бомбăсем пурĕ 200 штук ытла пăрахнă, унта пурăнакан халăхсем хушшинче вилнисемпе аманнисем 1 000 çын ытла шутланаççĕ. Кунсăр пуçне 700 çурта ишĕлтерсе антарнă.

Çурçĕр Китайра 8-мĕш революцилĕ халăх çарĕн отрйачĕ Шуљде-Синтай таврашĕнче (Хебей провинци) Йапонин чаçĕ çине атакăлана. Китайĕцсем 100 винтовкă, тăвата пулемет тата ытти вăрçă хатĕрĕсем те туртса илнĕ. Йапони салтакĕсене 80 çын ытла тата тепĕр офицера тыткăна илнĕ.

Хенаљ провинцин çурçĕр пайĕнче йапонĕцсем, Цзўане тытса илнĕ хыççăн Хуанхе йуханшывĕ çыравĕсем йеннеле наступлени туса пыраççĕ.

(ТАСС).

Польшă металлисĕсем фашиссене отпор параççĕ

Августăн 27-мĕшĕнче Варшаври авиасавăтра савăт делегачĕсен суйлавĕсем пулса иртнĕ. Фашисла профсойузсен руководстви суйлав умĕнхи кампанине шавлăн организациленĕ—листовкăсем салатса сўренĕ, çынсене хăратса тата вĕсене тĕрлĕ сăмахсемпе хăйсем йенне çавăрма хăтланнă. Анчах, фашисла профсойузăн пĕр кандидатурине те суйламан. Рабочисем нумай сасăпа (80 процент) 4 делегатне те металлиссен класлă пĕрлешĕвĕ тăратнă кандидатсене суйланă.

(ТАСС).

Италин Испанири интервенцийĕ вăйлансах пырат

Англи пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, Англи ĕçĕсен Римри поверенннăйĕ йулашки виçĕ ерне хушшинче Италин йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Чиано патĕнче тăвата хутчен пулнă.

Чиано Англи ĕçĕсен поверенннăйне каллех мăшкăласа ответленĕ, вăл: Итали правителстви „Итали легионерĕсене (доброволĕцсене) Испание йарассинчен пăрăнма пултараймаст",—тенĕ.

(ТАСС).

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăçри фронтра Ебро йуханшывĕн районĕнче пăлхавçăсемпе интервентсем йулашки вăхăтра пысăк çухатусем тунипе хăйсен вăйĕсене реорганизацилеççĕ, çавăнпа та вĕсем активлăн вăрçăймаççĕ.

Центрти фронтра республикă çарĕсем августăн 29-мĕшĕнче Альмаден районĕнчи Гвадалпераљ йатлă йал патне çити малала кайнă, вĕсем Пуенте деЉ Арсобиспоран 30 километр кăнтăрала ăнăçлăн контратакă тунă, пăлхавçăсене хăйсен позицийĕсенчен хĕссе кăларнă. Августăн 30-мĕшĕнче республиканĕцсем наступлени тума чарăнман.

(ТАСС).

Франци компарти Тĕпкомĕ чĕнсе калани

Франци компарти оргăнĕнче—«Юманите» хаçатра Францири коммунисла парти Тĕпкомĕ чĕнсе каланине пичетлесе кăларнă.

„Май уйăхĕнчи пекех хаљхи вăхăтра,—тенĕ чĕнсе каланинче,—Йевропăра вăрçă хăрушлăхĕ çĕнĕрен ўссе кайрĕ. Гитлĕр Чехословаки чиккисем патне хăйĕн дивизисене илсе пырса тултарат. Фашисла Германи пичечĕ Чехословакине хирĕç урса кайсах кампани туса пырат.

Хаљхи вăхăтра Германине тытса пыракан пуçлăхсемшĕн сăмах Чехословакире пурăнакан нимĕçсен прависемпе интересĕсем çинчен мар пырат. Рейхстага вут тĕртсе çунтарса йаракансен тĕп тĕллевĕ питех те уççăн курăнса тăрат. Вĕсем Йевропă картти çинчен Чехословаки республикине шăлса пăрахма тăрăшаççĕ, мĕншĕн тесен вăл республикă вăтам Йевропăра вăрçă пуçарса йарассине чăрмантарса пыраканĕ, вăл ирĕклĕх вучахĕ, фашисла варвăрствă хумне хирĕç цивилизацин тĕрекĕ пулса тăрат. Чехословаки республикĕ вăл—Франци сойузници, Франци унăн викама пăхăнманлăхне чаплă та тĕрĕс обйазателствăсемпе гарантилет. Хаљхи вăхăтра Гитлĕр пуçарса йама хăтланакан вăрçа сирсе йама май пур. Çакна тума Францине ытти çĕршывсем вăрçăна мĕн пур майсемпе чăрмантарма хатĕр тăни çинчен пĕлтерни те çителĕклĕ пулнă пулĕччĕ.

Йулашки çулсем хушшинче Йапони пĕрмайах Совет Сойузне хăратса пычĕ. Анчах, Йапони тапăнма хăтлансан малтанхи хутĕнчех рабочисемпе хресченсен аслă республикĕ агрессăра отпор панине туйса илсе, Йапонири вăрçă чĕртсе йаракансем кайала чакрĕç.

Акă, çак метăдпа мире çăлса хăварас текен нацисен пурин те ĕçлемеле".

Унтан чĕнсе каланинче çапла çырнă: „Гитлĕр Чехословаки çине тапăнсан, вăл вара Франципе, хăй çине илнĕ обйазателствăсене тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пыраканскерпе, тĕлме тĕл пулса тухĕ!

Гитлĕр Йевропăра ылханлă вăрçă тапратса йарсан, вăл вара мирĕн пĕрлешĕннĕ вăйĕсен хăвачĕ çумне пĕрĕнсе саланса кайĕ!".

(ТАСС).

ССРС хулисем тăрăх

ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Удмурт АСС Республикĕн Ижевск хулинчи правителства учреждениĕсен çурчĕ.

А. Иоселевич фото-ўкерчĕкĕнчен („Пресклише").

„Перекопа штурмлани"

Трамвай чул кĕпер тĕлне çитсе чарăнат те, есĕ А. С. Пушкин йачĕпе тăракан илемлĕ искусствăн музейне кĕме васкатăн.

Умра—пахча ăшĕнче—античнăй архитектурă илемĕпе тунă театр йевĕрлĕ хитре çурт. Карта çумĕпе кăтра акаци, ĕмĕрĕпе йешĕрекен чăрăш тĕмĕсем тăсăлаççĕ. Çерем. Музейе кĕмели пусма умĕн шурă сăнлă икĕ скульптурă—красноармейĕцсем.

Урамра августăн хĕвелĕ хĕртсе пĕçертет, тротуар вĕрипе ирĕлет; унтала-кунтала москвичсем васкаса иртеççĕ... Трамвай, троллейбус, автомашинă, мотоцикл...—хурçă, електричĕствă ĕмĕрĕ...

Шалта—ик-виçĕ пин çул кайарахри, авалхи тĕнче..

Йегипетсен фараонĕсем, Грецин, Палестинăн, Карфогенăн, Финикийăн искусстви уçăлат...

Сылтăм йенне иртетĕн те—умра нумай пулмаст пулса иртнĕ героикăлă Хĕрлĕ Çарăн героикăлă кунĕсем килсе тухаççĕ...

Схемă. Екскурсовод. Вăл кăнтăр фронт çарĕ иртнĕ çула йĕрлет, кăтартат. Епĕр, курма килнĕ халăх, унăн указки тăрăх Хĕрлĕ Çар мĕнле çулпа иртни çинчен пĕлетпĕр, куратпăр...

Умра диорамă. Диорамă вăл—пространствăри картинă.

Таса, уйар кун, анчах унта та кунта шур пĕлĕт татăкĕсем курăнкалаççĕ. Тĕл-тĕл вăл пĕлĕтсем хура сăн илнĕ, йе хĕрелнĕ, çулăм сăнĕ ўкнĕ.

Темиçе километра тăсăлса выртакан хир, лупашкасем; йалсем сапаланнă, уйрăм çуртсем, хутăрсем. Ав сулахайра çиларманĕ .. Анчах пур çĕрте те салтаксем, салтаксем, салтаксем...

Тинĕс хумĕ йевĕрлĕ, иртет Хĕрлĕ Çар шуррисем çине... Акă çиларманĕ çинче шуррисен пĕр ушкăнĕ йулнă. Вăл ушкăн хăш вăхăта та пулин чарас тет Хĕрлĕ Çар хумне, вăл вăхăтра хăйсен пехотине, артиллерине, обозне тартма хăтланат, анчах красноармейĕцсем вирлĕн иртеççĕ... акă пĕр красноармейĕц аманнă, анчах вăл тепĕр красноармейĕц çине хĕçне хăмсарнă шур офицере çавăнтах персе ўкерет...

Вăрçăн динамики, Хĕрлĕ Çарăн героикăлă, хастарлă ĕçĕсем куç умне килсе тухаççĕ те, шухăшра тахçанчен йулаççĕ. Иртни, пулни, граждăн вăрçинчи епизодсем аса килеççĕ...

Акă пĕр нихăçан манмала мар епизод. Красноармейĕц хĕрарăм йуланутпа пырат, вăл вирлĕн, хастарлăн çапăçу ăшне кĕрет... унтан инçех мар урапа çинче шуррисен йенче, офицер майри пулас, пуçне урапа айне пытарса тĕршĕнет.. Таврара снарйадсем çурăлаççĕ, пульăсем шăхăраççĕ.

Сахал мар хастарлă хĕрарăмсем граждăн вăрçинче писсе тухнă, фронтсенче вирлĕн ĕçленĕ...

„Перекопа штрумлани" выставкăна курма кирлĕ. Вăл граждăн вăрçин героикăлă кунĕсене аса илтерет. Вăл патриотла воспитани парас тĕлĕшпе те пысăк тата паха йапала пулса тăрат. Вăл совет халăхăн патриотисăмне хăпартат, хамăр çĕре сыхлама, пахалама чĕнет.

И. Давыдăв.

Мускав, август.

Потребителсем ыйтнине пурнăçламаст

КАНАШ. Аччари йалпо председателĕ Йегорăв потребителсем ыйтнине пурнăçлама тăрăшмаст. Заказ кĕнеки çине çырса панă заказсене çуррине те пурнăçламан. Йалпо уйрăмĕсенче те ĕçсем начар пыраççĕ. Йалмачча лавкинчи прикашчик Никитин хăйне пĕр пĕр йапала кирлĕ пулсан çеç лавкана уçат. Иртемен Кушкăри лавкара тараса та çук. Çавăн пирки таварсене таçтан тупнă, тутăхса пĕтнĕ авалхи тарасапах турттаркаласа сутаççĕ.

Йанкăлчри йалпо председателĕ Афанаçйĕв йалпо правленине пырса та курмаст. Август уйăхĕнче пурĕ те 2 хут çеç пынă. Прикашчиксенчен укçа-текене вăхăтра пухмаст, таварсене вăхăтра тупса илсе килмест. Ийуль уйăхĕшĕн кассăвăй отчота бухгалтерине халĕ те тăратман, çапла вара ревизи комиççисем, нимĕнле документсем те çук пирки, ревизи тумасăр лараççĕ.

А. Йазыков.

Хут тавраш çырса илни

Хăйсемпе куçа-куçăн тăрса калаçман епĕр. Çакна аван пĕлетпĕр: Максимăв—Чăваш республикĕнчи Çутĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ; Михайлăв—суккăрсен Куславкка районĕнчи Чашламари шкул директăрĕ; Алексейĕв—çак шкулти учител-воспитател.

Тата çакă пирĕншĕн паллă: çак граждăнсем хушшинче çулталăк хушши ытла ĕнтĕ хутсем çырса илесси пырат.

Акă мĕнле вăл: Алексейĕв республикăри пĕр редакци урлă Çутĕç Халăх Комиссариатне хăйĕн 1937 çулхи ийуњ, ийуль, август уйăхĕсенчи ĕçукçине вăтам шутпа илес тесе жалăбă çырса йанă. Çакăн хыççăн Максимăв питех те хумханулăн, аçа-çиçĕмлĕ хăвăртлăхпа ответ пама ыйтса çакăн йевĕрлĕ хут çырат:

„Директору Михайлову.

Наркомпрос Чувашской АССР предлагает Вам дать об'яснение: из какого расчета была произведена зарплата учителю-воспитателю Вашей школы Н. Алексееву. Из жалобы Алексеева видно, что ему выдана зарплата исходя из твердых ставок. Н. Алексееву необходимо выдать зарплату из расчета среднего заработка, по какой причине он не дополучил.

Ответ ожидается 9-VII-38 г.

Зам. НКП ЧАССР—Максимов.

7-VII 38 г."

Ку çырура чĕре патне сиксе лĕн пырса тивекен: „предлагает", „необходимо выдать", „ответ ожидается" сăмахсем те йалтах вырăнта. Пĕр йенчен шел вара: çырăвĕ ийулĕн 11-мĕшĕнче кăна вырăна çитет. Максимăв, хăй, виççĕмĕш кунĕнче, ийулĕн 9-мĕшĕнче, ответ кĕтет!

— Вăхăт виçĕмкунах иртсе кайнă, — терĕ Михайлăв.

Алексейĕв воспитателĕк уйăхри вăтам укçи 323 тенкĕ те 25 пус. Вăл çавах иртнĕ çулхи ийуњ, ийуль, август уйăхĕсенче 253 тенкĕ те 89 пус шучĕпе ĕçукçи илсе тăнă. Уйрăмлăх пурах. Михайлăв халĕ те хăйĕн „позицине" йышăнса тăрат. Хăт ăна тем ту, укçа тўлемест.

Максимăв çаплах çырат:

„Директору Михайлову.

Копия: учителю Алексееву.

Наркомпрос Чувашской АССР предлагает выплатить т. Алексееву разницу в зарплате за июнь, июль, август месяцы 1937 г., получившуюся ввиду неправильного расчета за эти месяцы исходя из расчета основной ставки, а не средней месячный „за учебный год".

Çакăнтан ĕнтĕ ĕç татăкла пек. Пĕр Михайлăв кансĕрлет. Ну, паллах, вăл укçана памасăр тăраймĕ. Алексейĕв воспитател хăйне тивĕçлĕ укçана илĕ. Вăл укçана тўлени çинчен Михайлăв директăр, хăй мар пулсан та, районти çутĕç пайĕ пĕлтерĕ.

Иван Тот-тă.

Активлă трахработник

А. Йефимăв 7 çул хушши Йамаш йалсоветне (Çĕрпў р-нĕ) кĕрекен йалсенче трахработник пулса ĕçлет. Йефимăв йулташ активлă трахработник. Тăрăшса ĕçленĕшĕн вăл 9 хут преми илнĕ.

Йефимăв ĕçлекен участкăна йал кĕрет. 1938 çулăн пуçламăшĕнче кунта трахомлисем 45 çын шутланнă. Пайанхи кун чирлисем 48 çын çеç йулнă.

Иулашки вăхăтра Йефимăв 1 допризывнике трахомран сыват рĕ.

К. Михайлăв.

Ачасен техникă выставки уçăлчĕ

Республикăри ачасен техникăлă йалхуçалăх тĕп станцинче августăн 30-мĕшĕнче ачасен республикăри техникă выставки уçăлчĕ. Выставкăна районсенчи çамрăк техниксем нумай експонатсем тăратреç. Сăмахран, Шупашкар районĕнчи Томаккасси йалĕнчи çамрăк фотоконструктăр хăй тунă „лейка" фотоаппарат, Канаш районĕнчи ачасен техникăлă станцинчи Петр Абламский „лейкă" фотоаппарат, Шупашкарти ачасен техникăлă станцинчи Борис Федарăв пĕчĕк фотоаппарат „микролейкă", Çĕрпўри техникăлă станцинчи Алексей Исакăв „К. В." радиоприйомник тата ытти çĕртен те тĕрлĕрен моделсем тăратнă.

Выставкăра фото, радио, йалхуçалăх тата авиамоделисăм пайĕсем пур.

Йалхуçалăх пайĕнче тĕрлĕ интереслă експонатсем, чĕрчунсем пур. Фото пайĕнче нумай фотоальбомсем, ачасем тунă тĕрлĕ фото-ўкерчĕксем, пĕчĕк фотоаппаратсем тата хăйсем тунă „лейкăсемпе" ўкернĕ фотоўкерчĕксем пур.

Авиамоделисăмпа чи лайăх модел Шупашкарти 6-мĕш № лĕ шкулта вĕренекен Борис Борьков тăратнă. Вăл модел—бензинлă моторпа ĕçлекен самољот.

Радио пайĕнче: тĕрлĕ радиоприйомниксем, телевизор, усилителсем, детекторлă радиоприйомниксем, передатчиксем пур.

Çав вăхăтрах республикăри ачасен техникă выставкине хатĕрленес тĕлĕшпе нумай районсенчи техникăлă станцисем йапăх ĕçлереç.

Н. Никифăрăв.

Физкультурă ĕçĕ çук

Шупашкарти çĕнĕ стройкăри çамрăксем хушшинче физкультурăпа спорт ĕçне халĕ те йĕркелемен. Физкультурă ĕçне йертсе пыракан пулман пирки, футбол тата волейбол хатĕрĕсем ахалех выртаççĕ. Физрук пайанхи куна çитсе те нимĕнле ĕçте тумаст.

В. Дмитрийĕв.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

ФЕЛЙЕТОН

377,8 метăрлă хум çинче

Итлĕр! Виççĕр çитмĕл çиччĕ целых та сакăр деçатых метăрлă хум çинче Шупашкар калаçат. Вырăнти вăхăтпа сакăр сехет те утмăл пилĕк минут... Апла мар, каçарăр, халĕ вырăнти вăхăтпа сакăр сехет те аллă пилĕк минут.

Итлетпĕр. Итлетпĕр итлетпĕр те, самантлăха нимĕн те илтместпĕр. Репродуктăра алла илсе шаккатпăр, пăхатпăр, винтисене пăркалатпăр Сасартăк—сасă:

— Итлĕр! Шупашкар калаçат. Халĕ пилĕк минутлăха тăхтав тăватпăр.

Тăхтатпăр. Сехет çине пăхса илетпĕр. Кĕтетпĕр. Итлеме хатĕрленетпĕр. Пилĕк минут иртет. Пĕтрĕ тăхтав.. Çук, пĕтмен Ултă минут иртет. Çиччĕ. Саккăр. Вунă минут иртрĕ.

— Итлĕр! Електроенерги пулман пирки тата ытти хатĕрлĕх(?) çитмен пирки тăхтав вăрăма тăсăлчĕ. Н. агроном çырнă лекцине паратпăр. Республикри пур районсенче те кĕрхи тырра акма тухрĕç. Акнă вăхăтра кашни колхозăн, кашни колхозникăн мĕн пĕлсе тăмала ха? Акă мĕн...

Колхозник итлет. Нимĕнле урăх шухăш шухăшламасăр репродуктăр умĕнче итлесе ларат вăл. Каламa çук кирлĕ ыйту. Агроном сăмахĕ уншăн темрен те хаклă. Агрономăн аслă сăмахĕ нихçан та йăлăхтарас çук ăна. Унăн сăмахне, унăн лекцине колхозник кунсеренех те итлеме хатĕр Анчах, пулăт авăн пек вăхăт: агрономсем колхозсенче час-часах пулаймаççĕ, ирĕрен те кирлĕ ыйтусем çинчен вăхăтра уйрăм лекцисем вулаймаççĕ. Кун пек чухне вара колхозсене, колхозниксем патне пулăшăва радио килет. Акă итлет колхозник. Ниçта каймасăр-тумасăр, хăй киленче ларнă çĕртех лекци итлет. 20 минут хушши калаçнă хыççăн:

— Çакăнпа пĕтеретпĕр,—тет радио.—Вулаканĕ Миронăвă пулчĕ.

— Чим-ха. Мĕнле-ха капла?—репродуктăр çине пăхнă май, пуçне пăркалат колхозник. Шухăша кайат. Темĕн çитмен пек туйăнат ăна. Çитмен пек çеç те мар, пĕтĕмĕшпе илсен, лекцине нимĕн чухлĕ те ăнланайман вăл. Лекцийĕ те, йалхуçалăх ĕçĕнчи специалиссем çырнă тĕрлĕ кĕнекесенчен илнĕ цитатăсемпе, татăк-кĕсĕксемпе майлаштаркаласа вырăнти условисемпе пĕр çыхăнтармасăр тунăскер, начар ĕнтĕ. Вулаканĕ вара ăна татах та начарлатат: чылай сăмахсене пăсат, пăтраштарат. Сăмахĕсем урлă пуплевĕсем те пăсăлаççĕ, пăтрашăнаççĕ. Кали тăварĕ тейес вырăнне „кўлĕ тăварĕ" тенине итлетпĕр. Натри тейес вырăнне—„наттари" т. ыт. те. Паллах, радио тăрăх çакнашкал „лекци" итлекен колхозник пăшăрханнинчен, итленĕ хыççăнах çак лекцине тĕплĕн анлавас пирки тепĕр агроном патне консультацине кайнинчен нимĕн тĕлĕнмели те çук.

Августăн 28 мĕшĕнче литературă передачи пулчĕ.

— Итлĕр! (Ку сăмаха вара пăтĕ те ăнланмала, уçăмлăн калаççĕ—хăнăхса çитнĕ пулас. П. Л.)... хум çинче Шупашкар калаçат. Микрофон умĕнче çамрăк поетсем.

Итлетпĕр. Хăлхасене чанк тăратпă епĕр. Мĕншĕн çав терийех тесен, итлес килет, çамрăк поетсене итлемении питĕ те нумай пулатчĕ ха. Хăйĕн кулленхи ĕçне активлăн йавăçтармаст вĕсене радиокомитет. Литературă передачисене пуринчен ытла куçарнă произведенисемпе, произведенисен сыпăкĕсемпе (пуçламăшĕ те çук, вĕçĕ те) тултарат.

Микрофон умĕнче Малкай, Йастран. Вĕсем хăйсен сăввисене вулареç. Услине черет. Усли Васлейĕ „Походри йурă" йатлă сăввине вулама пуçларĕ. Пуçларĕте, 3—4 куплет вуланă хыççăн тапах чарăнчĕ.

Итлетпĕр. Мĕн пулчĕ-ши тата, тетпĕр. Текст çине пăхмасăр вулама пикеннĕ пулĕ те ĕнтĕ, маннă пулĕ, çавăнла такăнчĕ пулĕ, тетпĕр. Уйччен те пулмарĕ: „Что с вами?" тенĕ сасă, микрофон умĕнчи автăр сасси илтĕнчĕ. Çавăнтах ăна хирĕç пăшăл-пăшăл, мăкăр-мăкăр сасăсем: „Хăвăртрах вула-ха.." „Вăраммăн тăсарах вула-ха..." „Тата нумай йулчĕ и?".

Автăр вуласа пĕтерчĕ. Музыкă.

— Итлĕр! Çакăнпа пĕтеретпĕр. Йертсе пыраканĕ Миронăвă пулчĕ

Автăра кам чăрмантарса такăнтарнине пĕлтĕмĕр вара. Анчах „йертсе пыракан" Миронăвăна микрофон умĕнчи вулакана пўлнĕ май, кирлĕ-кирлĕ мар сăмахсем каласса дисциплинăна пăсма кам ирĕк панине пĕлеймерĕмĕр.

Августăн 30-мĕшĕнче чăвашсен государствă хорĕ радио тăрăх концерт пачĕ. Калас пулат, ку концерта иртнĕ уйăхра та илтĕччĕ епĕр, иртнĕ çулхине те—йалахах пĕр йурă, пĕр кĕвĕ. Вăл йурăсене йурла-йурла хорисем манма та пуçланă иккен. Уйрăмăнах „Салтак ачисен йурри" тенĕскерпе вĕсем çав тери йапăх йурлареç. Ку йурăн музыкĕ те йанăравсăр та, сăмахĕсене те ыррăн ăнланма пулмарĕ. Ыйтас килет: хор хăйĕн репертуарне мĕншĕн çĕвĕ йурăсем кĕртмест? Çамрăксенчен Хирбикăв, Анчикăв, Лукин гармонилене çĕнĕ йурăсем сахал мар. Ăçта вĕсем? Илтместпĕр.

— Йулашкинчен радио итлекен йулташсем „Польанкă" йатлă йурă йурласа параççĕ,—тет микрофон.

Радио итлекенсем мар ĕнтĕ, хор йурлат пуљ.

Концерт пуçламăшĕнче хора йертсе пыраканĕ Могульовский пулат, терĕç. Унăн йатне кашни йурă пуçламăшĕнчех асăнчĕç. Анчах йалан урăхла: йе Магилевский, йе Мугалевский, йулашкинчен тата Мегиневский тесе хучĕç.

— Çакăнпа пĕтеретпĕр. Концерта йертсе пыраканĕ Миронăвă пулчĕ.

Суйас марччĕ. Концерта мар ĕнтĕ, передачăна илсе пыраканĕ пуљ.

Чăвашрадиокомитет час-часах районсенчен передачăсем туса иртерет. Ку—питĕ аван мероприйати. Вăл передачăсем йалавах тенĕ пек Шупашкартан паракан передачăсенчен вăйлăрах та туллирех тухаççĕ. Мĕншĕн? Вăл передачăсене те радиокомитетран кайнă работниксемех организацилесе иртереççĕ-çке?

— Мĕншĕн тесессĕн,—теççĕ радиоработниксем,—районран паракан передачăсене епĕр пур йенчен те çителĕклĕн хатĕрленсе иртерет пĕр.

Шупашкартан паракан передачăсене иртерме пур йенчен те хатĕрленсе тăни кирлех мар шим вар?

...Çакăнпа пĕтеретпĕр. Фелйетона „йертсе пыраканĕ" П. Ламанас пулчĕ.

Есĕр ССР Сойузĕн Оборонине тĕреклетмели займом

ОБЛИГАЦИСЕНЕ

АЛЛА ИЛНĔ-И?

ССР Сойузĕн Оборонине тĕреклетмели займа илме çырăннă тата облигацисене халиччен алла илеймен граждăнсен, вĕсене центрти йе районри перекет кассисене, займа çырăннă вырăнта илмеле. Предприйатисемпе учреждениĕсенчи бухгалтĕрсем, çавăн пекех йалсоветĕсем облигацисене унта леçсе панă.

Рабочисемпе служащисен облигацисене илме займшăн мĕн чухлĕ укçа тўленине кăтартакан предприйати йе учреждени бухгалтери панă справкăна, колхозниксен тата хресчен йединоличниксен займшăн укçа тўленине кăтартакан расчотлă квитанцине илсе пымала.

Займ çыранисем облигацисене алла иличчен займ тăрăх выљава хутшăнаймаççĕ.

Çак займăн виççĕмĕш выљавĕ 1938 çулхи çентаберĕн 11-мĕшĕнче Одесса хулинче пулат.

Государствă Кивçенлĕхĕпе Государствăн Перекет Кассисен Тĕп Управленийĕ.

Шупашкарти суту-илў пайне

аслă бухгалтĕр

(пĕрле апатланас тĕлĕшпе ĕçлекен пайра ĕçлеме)

икĕ бухгалтĕр,

виçĕ счетовод,

виçĕ каççир,

плановик економист

кирлĕ

Çавнашкалах магазинсенче, ларйоксенче тата киоскăсенче ĕçлеме прилавкă работникĕсем кирлĕ.

Çак адрĕспе пымала: ул. Кадыкова, 5/12, отдел кадров.

Аслă бухгалтĕр валљи хватер пур.

2—2

Çентаберĕн 3-мĕшĕнчен пуçласа Шупашкарти

саслă кино-театрта

саслă, документлă, çĕнĕ фильм

Песня молодости

кăтартаççĕ

СЕАНССЕМ: 6, 8, 10 сехетсенче касхине пуçланаççĕ.

Касса 3 сехетрен уçă.

Дирекци.

2—1

„Чăваш Коммунĕ" сырăнса илме хаксем: пĕр уйăха 2 т. 50 пус, 3 уйăха 7 т. 50 п., 6 уйăха 15 т., султалăка 30 тенкĕ. Подписка сыхăну уйрăмĕсем, письмоносецсем йышăнаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 461

Гор. Чебоксары, типография № 1 Чувашполиграфтреста, заказ № 711, ф. б. 58×94 п. в.